ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

16 (4430) №, 2015, апрель (ака), 16
(1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Туслă йыш çӳрет кунта – Сăвă та çырма ăста



**Надежда Александровна Алексеева шкулта вĕреннĕ чухнех хаçат-журналпа тачă çыхăну тытнă. Вĕсене çырăнса илнисĕр пуçне редакцие çыру хыççăн çыру ăсатнă. Ĕçĕсем хаçат страницинче кун çути курсан çав тери хĕпĕртенĕ хастар хĕрача.**

Паян вара Надежда Александровна Çĕрпӳ районĕнчи Тавăшкасси шкулĕнче кĕçĕн классене вĕрентет. Вăл – 4-мĕшсен ертӳçи. Хăйĕн вĕренекенĕсене пĕрремĕш класранпах «Тетте» журналпа туслаштарнă. Халĕ ĕнтĕ «Тантăш» хаçата та юратса вулаççĕ ачасем. Кунсăр пуçне Надежда Александровна хĕрачасемпе арçын ачасене сăвă-калав çырма хăнăхтарать. Чи ăнăçлă ĕçсене редакцие тăтăшах ярса параççĕ.

Класри чи лайăх вулакан Леня Иванов ертӳçе чун-чĕререн хисеплет, юратать.

– Пире Надежда Александровна чылай япалана вĕрентрĕ. Ӳкерме кăмăллатăп та лавккана каймассерен кăранташпа альбом туянатăп. Çитес вăхăтра «Тантăш» хаçатпа «Тетте» журнал валли ӳкерчĕксем тăвас ĕмĕтлĕ, – хăпартланать арçын ача. – Эпĕ сĕтел хушшине вырнаçсан йĕкĕреш Сашăпа Паша шăллăмсем ман çума сухăр пекех çыпçăнаççĕ. Вĕсем те ĕçе тытăнасшăн-çке!

Маша Петрова йышлă çемьерен. Çиччĕн пĕртăван вĕсем. Асли саккăрмĕш класра ăс пухать, кĕçĕнни сакăр уйăхра çеç-ха.

– Эпир чи пĕчĕккине пурте юрататпăр. Ун çинчен пĕчĕк заметка та çырас кăмăлăм пур-ха. Паллах, малтан хамăн ĕçе класс ертӳçине кăтартăп. Пăхса тухса тĕрĕсленĕ хыççăн çеç «Тантăша» ярса парăп, – ĕмĕтленет хастар Маша хавхалансах.

Тĕрлĕ авторсен чăваш кĕнекисене вулама кăмăллать Маша. Вулать те, тепĕр чухне темччен шухăша кайса çӳрет. Унти тĕп сăнарсемпе пĕрле савăнать те, хурланать те.

Ломоносов пек чаплă тĕпчевçĕ пулас ĕмĕтлĕ Настя Игнатьева шеп материал çырнă та. Çуллахи куна кăмăллаканскер шурă хута хуратса çакăн пек йĕркесем шăрçаланă. «Шкула çӳреме питĕ юрататăп. Чирлесен, пĕр кун пĕлӳ çуртĕнче пулмасан та çав тери тунсăха путатăп. Умра – каникул! Эпĕ ăна чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Ун чухне кашни кун чăх йăвинчен çăмарта пуçтарăп, кĕтӳрен таврăннă ĕнесемпе пăрусене юратса ачашлăп, йытă çурипе кăмăлтан выльăп».

Надежда Александровна вара кашнинпе кăмăллă.

– Манăн класри ачасем пурте пултаруллă. Эпир пĕр çемьери пек килĕштерсе пурăнатпăр, – çирĕплетет педагог хавассăн.

***Элиза ВАЛАНС.***

Çĕрпӳ районĕ,
Тавăшкасси.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

ÇЫРĂНТАРУ – 2015

### Хаклă çыннăмăрсем!

**«ТАНТĂШ» хаçатпа «ТЕТТЕ», «САМАНТ» журналсене** 2015 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче илсе тăма çак хаксемпе çырăнма пулать.

**«ТАНТĂШ»** – 273 тенкĕ те 78 пус,
**«ТЕТТЕ»** – 148 тенкĕ те 98 пус,
**«САМАНТ»** – 187 тенкĕ те 26 пус.

Кашни килте çак кăларăмсем пулни мĕн тери аван! Эсир вĕсене çырăннă-и? Çук? Вăхăта сая ан ярăр! Çырăнăр, юлташусене те, кӳршĕсене те калăр! Аса илтерĕр, ырă ĕç тăвăр!

Васкăр!

Республика тулашĕнчи индекссем:
**«ТАНТĂШ»** – 11466,
**«ТЕТТЕ»** – 11468,
**«САМАНТ»** – 11467.

Пуç пӳрни ĕмĕтленет: «Тантăш» вуласчĕ»,
Шĕвĕр пӳрни калать: «Самант» эп кăмăллатăп»,
Вăта пӳрни шухăшлать: «Мана «Тетте» пит кирлĕ»,
Ятсăр пӳрни çатăлтатать: «Пурне те çырăнасчĕ!»,
Кача пӳрни çирĕплетет: «Чуптарар-ха почтăна,
Ай, çĕклер-ха кăмăла!»

# Конкурс пĕтĕмлетĕвĕ

## «Константин Иванов тĕнчи»



Юля ГРИШНЯКОВА.



Екатерина ШАПЛИНА.



Михаил ВОЛКОВ.



Иван ЛЕОНТЬЕВ.



Тимур КОРОЛЕВ.



Максим ОХЛЯНОВ.



Елизавета ЛЕНТОВА.



Анна ПЕТРОВА.

**Тăван литературăн чи çутă çăлтăрĕсенчен пĕри Константин Васильевич Иванов çуралнăранпа кăçал 125 çул çитет. Çак паллă пулăма халалласа аслă поэтăн произведенийĕсенчи сăнарсене кăтартакан асăнмалăх маркăсăр почта открыткисене илемлетмелли ÿкерчĕксен конкурсĕ тĕлĕнмелле тухăçлă иртрĕ.**

Конкурса «Тантăш» хаçат вулаканĕсем хастар хутшăнни питех те савăнтарчĕ. Республикăри тĕрлĕ шкултан çеç мар, Чăваш Ен тулашĕнчи вулакансем те нумай ÿкерчĕк ярса пачĕç.

Çак кунсенче Константин Васильевич Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче конкурса пĕтĕмлетрĕç.

Пĕтĕмĕшле вăтам пĕлÿ паракан тата ÿнер шкулĕсенче вĕренекен 7-11 çулсенчи ачасен хушшинче пĕрремĕш вырăна Юлия ГРИШНЯКОВА /Шăмăршă районĕ, Шăмăршăри ача-пăча искусствисен шкулĕ; «Силпи ялĕнче» ÿкерчĕк/ тухма пултарчĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Елизавета ЛЕНТОВА /Улатăр районĕ, Улатăрти ача-пăча искусствисен шкулĕ; валак патĕнче тĕл пулнине сăнлакан ÿкерчĕк/, виççĕмĕш – Тимур КОРОЛЕВ /Шупашкар, 1-мĕш пуçламăш шкул; «Тимĕр тылă» произведение сăнланăшăн/.

12-15 çулсенчи çамрăк художниксенчен чи ăнăçлă та илемлĕ ÿкерчĕксене суйласа илме те çăмăлах пулмарĕ комисси членĕсене. Пĕрремĕш вырăна Максим ОХЛЯНОВ /Шупашкарти ачасен ÿнер шкулĕ/, Анна ПЕТРОВА /Шупашкарти ачасен Акцыновсем ячĕллĕ 6-мĕш ÿнер шкулĕ/, иккĕмĕш вырăна Иван ЛЕОНТЬЕВ /Шупашкарти 62-мĕш шкул/, Михаил ВОЛКОВ /Шупашкарти 37-мĕш шкул/, виççĕмĕш вырăна Екатерина ШАПЛИНА / Шупашкарти 4-мĕш лицей/ тухма пултарчĕç.

Çĕнтерÿçĕсен ÿкерчĕкĕсемпе усă курса почта открыткисем пичетлеме палăртнă.

Апрелĕн 24-мĕшĕнче 11 сехетре Шупашкарта К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче /Ленинград урамĕ, 29. Тел.: 62-21-43/ çĕнтерÿçĕсене чыслаççĕ.

*Владимир ФЕДОРОВ.*

**СĂНÿКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** çĕнтерÿçĕсен ĕçĕсем.

## Пĕчĕк çитĕнÿсемпе те савăнма пĕлекен Наташа



Вăрмар районĕнчи Пысăк Енккасси шкулĕнче вĕренекен Наташа Христофорова таврари илемлĕхе чĕрепе туять тейĕн, çутçанталăк черченлĕхне асăрхаса чун юратăвĕ витĕр ăна хут çине куçарать. Алĕçĕпе те аппаланать вăл, хăйне тата юлташĕсене валли тем те пĕр çыхать. Çемçе чунлăскер пÿлĕмри чечексене питĕ юратать. Çакă уншăн – чăн-чăн савăнăç. Вырăх-чĕрлĕх пăхма пĕрре те ÿркенмест, вĕсене сăмахсăрах ăнланать. Мĕн тери маттур пулăшуçă!

Савăнма пире нумай кирлĕ-и? Камшăн мĕнле пуль. Тепĕр чухне нумай та кирлĕ мар-çке.

– Манăн пĕчĕк çитĕнÿсем нумай, – тет Наташа йăл кулса.

Чăнах та, хĕрача хăйне тĕрлĕ енлĕн тĕрĕслеме кăмăллать. Шкулта иртнĕ «Çемьепе стена хаçачĕ кăларатпăр» конкурсра виççĕмĕш вырăн йышăннă. Çавăн пекех вăл, шкул вулавăшĕ палăртнă тăрăх, «Чи нумай вулакан вĕренекен» ята тивĕçнĕ. Алла кĕнеке тытмасăр тÿсеймест çав. Ăна пур çĕрте те ырлаççĕ.

Наташа – «Тантăш» тусĕ. Унăн сăввисемпе ÿкерчĕкĕсем хаçатра тăтăшах пичетленеççĕ. Вăрмар пики пĕлтĕр Çамрăк корреспондентсен слетне те хутшăннăччĕ. Унта пулса курнă хыççăн питех те хавхаланнине пĕлтерет.

Маттур хĕрачана малашне те ăнăçу сунатпăр! Ыттисем те Наташăран тĕслĕх илессе шанатпăр.

*Лариса ПЕТРОВА.*


## ĂША САЛАМСЕМ

Саламсене пĕлтермелли номерсем:
89876741833
89051975911



Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Туктамăш ялĕнче пурăнакан **Зоя Ивановна МИДАКОВА (ВЛАСОВА)** 67 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Иртсе кайнă кунсен аса илĕвĕ санăн пурнăçна çăмăллатса пытăр. Ачусен, мăнукусен юратăвĕпе киленсе нумай çул пурăнмалла пултăр.

Çулсем иртни ан сисĕнтĕр сана,
Вăй-халу пултăр иксĕлми,
Сунатпăр çирĕп сывлăх чунтанах
Тата телей ытам тулли.

*Ăшă салампа ИВАНОВСЕМ, ШАБАЛОВСЕМ, ВЛАСОВСЕМ.*
Çĕмĕрле районĕ.

✦ ✦ ✦

Юратнă мăшăрăм, хаклă аттемĕр, Элĕк районĕнчи Куракăш ялĕнче пурăнакан **Анатолий Юрьевич ИВАНОВ** ыран хăйĕн сумлă юбилейне паллă тăвать. Эпир ăна çирĕп сывлăх, кунсерен ăнăçу, тулли телей сунатпăр.

*Мăшăрĕ Светлана, хĕрĕ Наташа, ывăлĕ Саша.*



Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
**54802** - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
**11466** - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1804 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1422
Пичете апрель уйăхĕн 15-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

## ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ

### Çăлтăр паттăрĕсене халалласа

Пирĕн шкулта Космонавтика кунне халаллаа нумай мероприяти иртрĕ. Класс, шкул тулашĕнчи мероприятисене хаваспах хутшăнтăмăр, викторинăсемпе конкурссем йĕркелерĕмĕр. Интереслĕ çулçÿрев те пулчĕ.

Пире уйрăмах физикăпа математика вĕрентекенĕсем хатĕрленĕ ĕçсем кăсăклантарчĕç. Çиччĕмĕш класс вĕренекенĕсем физикăпа «Мĕншĕн космоса вĕçеççĕ?» темăпа сочинени çырчĕç. Саккăрмĕшсем кусăмсăр майпа иртекен викторина хатĕрлерĕç. Унта шкулти кашни ача хутшăнма пултарчĕ. «Космосшăн çапăçни», «Космосран вĕренни» фильмсене тăххăрмĕшсемпе вуннăмĕшсем хаваспах пăхса сÿтсе яврĕç, тĕрлĕ станцире пулса ыйтусене хуравларĕç. Кĕçĕн классенче вĕренекенсем тĕнче уçлăхĕ çинчен презентацисем хатĕрлерĕç.

Çăлтăр паттăрĕсене халалланă мероприятисем асăмра юлмалăх иртни кашнине савăнтарчĕ.

*Катя СМИРНОВА,*
*8 «б» класс вĕренекенĕ.*

### Хавалсă пирĕн шкулта!

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине тата К.В.Иванов çулталăкне халалласа тĕрлĕ ĕç туса ирттереççĕ. Анчахрах эпир литературăра паллă йĕр хăварнă çыравçă сума суса «Поэзи çăлтăрĕ» ятлă ăмăртăва хутшăнтăмăр. Калинин районĕнчи шкулсем хушшинче иртнĕ мероприятире эпир вунпĕррĕн хамăрăн ăсталăха кăтартрăмăр.

Ÿкерчĕксен конкурсĕнче вара пиллĕкмĕшуллтăмĕш классем маттур пулчĕç. Вика Тихонова ÿнер шкулне кăмăлпа çÿренĕренех унăн ĕçĕсем те ăнăçлă. Хĕрачан ÿкерчĕкĕсем «Тетте» журналта та тăтăшах пичетленеççĕ.

Константин Иванова халалланă тĕрлĕ ĕçпе пире чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕсем хаваспах паллаштараççĕ.

*Настя АЛЕКСАНДРОВА,*
*8 «б» класс вĕренекенĕ.*

Шупашкар,
28-мĕш шкул.

## Асанне, санпа мухтанатпăр



Манăн асанне Люба ятлă. Вăл çитмĕл икĕ çулта. Асаттепе иккĕшĕ çамрăк чухне инçетри Чукоткăра пурăннă. Асанне руда кăларнă çĕрте тăрăшнă. Темиçе метр тарăнăш çĕр айĕнче машинистра ĕçленĕ. Руда турттарнă, çынсене ĕç вырăнне илсе çитернĕ, унтан каялла илсе тухнă. Хĕрĕх пилĕк çул йывăр çĕрте вăй хунă хыççăн тивĕçлĕ канăва каять.

Эпир асаннепе мухтанатпăр. Вăл пире шкула ăсатать, кĕтсе илет. Шăллăмпа иксĕмĕре кăпăшка кукăль пĕçерсе çитерет.

Асаннепе мухтанатпăр çеç мар, ăна юрататпăр та.

*Вероника МУРАВЬЕВА.*

Шупашкар,
47-мĕш шкул.
**САНÜКЕРЧĔКРЕ:** юратнă асанне хăй кăмăллакан ĕçĕнче.

## Ташă ушкăнĕн – юбилей!



Шупашкарти 19-мĕш вăтам шкулта ăçăлнă «Рябинка» ташă ушкăнĕ çирĕм пилĕк çул тултарчĕ. Вăл йĕркеленнĕренпех кунта вĕренекенсем тĕрлĕ ташă ташлама çÿреççĕ: моряк, ача-пăча, папуас, чикан ташшисем, румба... «Рябинка» ушкăна Елена Николаевна тата Михаил Николаевич Девяткинсем ертсе пыраççĕ.

Кунта çÿрекенсем висĕ ушкăна пайланаççĕ: кĕçĕн çулхи ачасем, вăтаммисем тата аслисем.

Петĕр Хусанкай ячĕллĕ Культура керменĕнче савăнăçлă уяв иртрĕ. Куракансем – вĕрентекенсемпе ашшĕ-амăшĕсем – хыттăн алă çупни ачасене татах та хаваслăн ташлама хистет. Кашни ташă хăйне евĕрлĕ, тумĕсене те ятарласах çĕленĕ.

Уяв ячĕпе 19-мĕш вăтам шкул директорĕ Наталья Анатольевна Маслова Девяткинсене саламларĕ. «Пирĕн вĕренекенсем урок хыççăн та вăхăта усăллă ирттереççĕ: ташлаççĕ, чун илемне пуянлатаççĕ. Пурне те ырлăх-сывлăх сунатăп», – терĕ вăл.

Ăнăçу сире, ташăçăсем!

*Любовь КУДРЯВЦЕВА.*
**АВТОР сăнÿкерчĕкĕсем.**

## Маттур, Люба!



Пăлапуç Пашьел шкулĕнче аслă классенче вĕренекенсем Чăваш патшалăх университечĕ ирттерекен конкурссене хастар хутшăнаççĕ. Нумай пулмасть чăваш тата вырăс филологийĕпе журналистика факультетĕнче Аслă Çĕнтерÿ пулнăранпа 70 çул çитнине тата республикăри К.В.Иванов çулталăкне халалласа «Хăвна кăтарт – 2015» фестиваль-конкурс иртрĕ. Унта 7-11-мĕш класра вĕренекенсем хутшăнчĕç. Мероприяти икĕ куна тăсăлчĕ.

Пĕрремĕш кунне пĕчченшерĕн, дуэтпа, хорпа тата халăх юррисене юрлакансем, литературăпа хореографи композицийĕсене сăнарлакансем, пĕчченшерĕн е ушкăнпа ташлакансем тупăшрĕç. Тепĕр кун çамрăк талантсем тĕрлĕ хайлава пăхмасăр илемлĕ вуласси енче ăмăртрĕç. Конкурс висĕ номинацире иртрĕ: «Автор поэзийĕ», «К.В.Ивановăн поэзи эткерĕ» тата «Патриотизмпа çар поэзийĕ».

Конкурса республикăри 73 ача хутшăнчĕ. Хамăр йышран вара хăйĕн пултарулăхне вуннăмĕш класра вĕренекен Люба Мешкова тĕрĕслерĕ. Вăл икĕ номинацире те палăрчĕ. Хăй çырнă «Вăрçă тата пурнăç» чуна пырса тивекен сăвва /ертÿçи С.П.Никитина/ вуланă чухне пухăннисен куçĕсем шывланчĕç. «Автор поэзийĕ» номинацире Люба 1-мĕш вырăн йышăнчĕ! «Патриотизмпа çар поэзийĕ» номинацире вара О.Козловăн «Баю-бай, ты мой единственный...» хÿхлевне пăхмасăр каласа вăл иккĕмĕш вырăн çĕнсе илчĕ.

Маларах иртнĕ чăваш филологийĕпе культура уйрăмĕ йĕркеленĕ тăлмачăсен конкурсне те хастар хутшăнчĕ Люба. Ун чухне вăл Ордем Гали çырнă «Кĕркунне асамлăхĕ» хайлава вырăсла илемлĕ куçарнипе палăрчĕ.

Любăпа унăн ертÿçисене малашне те ăнăçупа çитĕнÿ сунатпăр!

Патăрьел районĕ.

## Анне пек учитель пулатăп



– Анне пек учитель пулатăп, кĕçĕн классене вĕрентĕп! – тет Патăрьел районĕнчи Аслă Чемен шкулĕнче виççĕмĕш класра вĕренекен Виктория Тимошкина.

– Эпĕ шкула хаваспах çÿретĕп. Кашни кун çĕнĕрен те çĕнĕ темăсем вĕренсе хамăр тавракурăма пуянлатса пыратпăр. Класри ачасемпе питĕ туслă. Пĕр-пĕрне пулăшатпăр. Ун пек чухне кун иртни те сисĕнмест. Аслă классенче вĕренекенсем пек ăслă пулма ăнтăлатпăр, – савăнăçлăн каласа парать Виктория.

Алина Ивановна Ананьева, класс ертÿçи, ăна яланах мухтать. Кăçал Патăрьелĕнче кĕçĕн классем хушшинче олимпиада иртнĕ. Çак пĕчĕк, маттур хĕрача малти вырăна тивĕçнĕ. Тăтăшах «Чĕвĕлти чĕкеç» конкурса хутшăнать. Кĕнеке те вулама юратать. Вика спортпа та питĕ туслă. Класĕнче чи хăвăрт чупакансенчен пĕри вăл. Пысăк ĕмĕчĕсен шутне вара йĕлтĕрпе ярăнма вĕренесси кĕрет. Çак ĕмĕте пурнăçлас тесе тăрăшать.

*Мария САМДЕЛОВА.*
*ЧПУ, 2 курс.*

# Пĕлтерĕшлĕ медаль

**Йĕпреç районĕнчи Пучинке шкулĕн 10-мĕш класĕнче вĕренекен Оля Матвеева спортпа тахçантанпах туслă. Кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухне çăмăл атлетикăра пĕрре мар çитĕнӳ тунă.**

**Йĕлтĕрпе чупма та кăмăллать Пучинке пики. Хĕллехи шурă тумлă çанталăка кăмăлланăранах таçта çитме те хатĕр вăл спорта юратакан тус-юлташĕсемпе.**

– Спортра пĕрре мар малти вырăнсене йышăннă эпĕ. Çапах та асра юлмалли кăçал пулчĕ. Февраль уйăхĕнче пирĕн шкулта совет салтакĕсене Афганистан çĕрĕ çинчен илсе тухнăранпа 26 çул çитнине халалласа пысăк мероприяти иртрĕ. Çак уява, чăваш тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ тĕрлĕ хулара пурăнакан çар çыннисем те килсе çитрĕç. Музыка вĕрентекенĕ Лилия Михайловна Иванова тата ытти педагог тăрăшнăран кашни класс хăнасен умĕнче пултарулăхĕпе



паллаштарчĕ. Юрласа та ташласа куракана ырă туйăм парнелеме пултартăмăр. Ку уява ахальтен йĕркелемен. Пирĕн ялта çуралса ӳснĕ Валерий Михайлович Иванов хăй вăхăтĕнче Афганистанра службăра пулнă. Унти лару-тăрăва питĕ лайăх пĕлекенскер вăрçăра пуç хунă салтаксене, юлташĕсене асра тытса халалланă вăл асăннă уява. Пăшалтан перекенсен ăмăртăвне те йĕркелерĕç унта. Шутламан çĕртенех, шикленсех хутшăнтăм унта. Намăс курасран хăрарăм ĕнтĕ. Кайран, шухăшласан, шухăшласан хăравçăлăха хамран хăваласа кăлартăм. Чи кирли выляса илни мар, хутшăнни-çке! Хамран хам тĕлĕнтĕм ун чухне, эпĕ – пĕрремĕш вырăн çĕнсе илтĕм. Медале тивĕçрĕм. Ăна пĕр офицер çакса ячĕ.

– Саламлатăп! – терĕ çурăмран лăпкаса. – Савăнатăп эсĕ çапла пултарулăллă пулнăран. Сирĕн пек хас-тарсен ячĕсем нихăçан та манăçа тухмаççĕ. Вĕсене яланах ырăпа аса илеççĕ. Лайăх вĕрен, хастар ĕçле, кирек ăçта та тăрăшуллă пул. Апла пулсан, кӳр аллуна.

Тăсрăм сылтăммине. Алла хытă чăмăртакан çын – ырă кăмăллă, шанăçлă тенине пĕрре мар илтсеччĕ. Çак офицер та çаплах пулчĕ-тĕр. Ку вара маншăн хайне евĕр савăнăç пулчĕ. Апла пулсан, нихăçан та, кирек хăш тупăшура та пăшăрханса ӳкмелле мар. «Эй, манран пулмасть, пĕтрĕм эпĕ», – тесен пушшех хăвна хăв тăлласа лартатăн. Ăшра яланах хавхалану пулмалла, çитĕнӳ еннелле ăнтăлма вара нумай тăрăшмалла. Çапах та, пĕлес килет, пур-ши ачасен пысăк ĕмĕт? Манăн хамăн ĕмĕт тем пысăкăшах. Çитменнине пĕрре çеç мар, темиçе – юплĕюплĕ. Тĕрĕссипе каласан, пур юппинче те пулса курас килет. Мĕнле ĕнтĕ, пурнăç кăтартĕ. Çапах та çав ĕмĕтсемпе пурăнма мана питĕ килĕшет, – пĕлтерчĕ хăй шухăшне Оля.

# Йăмăкĕсене юратакан Глеб



Çутçанталăкăн кашни вăхăтне кăмăллакан Глеб Тарасов халĕ çуллахи кунсене чăтăмсăррăн кĕтет.

– Паян кантăкран кĕрекен хĕвел пайăрки те урама йыхравласа кăчăк туртнă пекех туйăнать. Çерçисем те авă кӳлленчĕкре çăвăнма тытăнчĕç. Юр васкаса ирĕлет, çуллана çывхартать, – тет Вăрнар районĕнчи Вăрнарти 2-мĕш шкулăн 2 «в» класĕн хастар вĕренекенĕ.

Глеб çав тери ырă ача. Çак çĕр çинчи пур чĕрĕ япалана та юратать вăл: йытăсене, кушаксене, кайăккĕшĕке, нăрă-лĕпĕше...

– Вĕсен те çак çĕр çинче пурăнас килет-çке... Эпĕ вулама юрататăп, уйрăмах юмах-халап кăмăла каять. Çавăнта чĕрĕ чунсем пĕр-пĕринпе калаçни, килĕштерсе выляни, аслисемпе кĕçĕннисене кăмăлтан пулăшни мĕн тери хăпартлантарать, – ăнлантарать Глеб хавасланса.

Чăваш чĕлхи урокне чăтăмсăррăн кĕтет арçын ача. Вĕрентекен парса янă ĕçсене хавасланах пурнăçлать.

– Глеб – тăрăшуллă ача. Паянхи ĕçе нихăçан та ырана хăвармасть. Чăваш чĕлхине юратса вĕренет. Кĕнекешĕн каçса каять, çавăнпа час-час библиотекăна çӳрет. Алла илнĕ хайлава кăсăкланса вулать те пĕрле вĕренекенсене хăпартланса каласа парать. «Тетте» журнала та кăмăллать. Унти сăвă-калавпа, юмах-халаппа савăнсах паллашать. Тус-юлташĕсене те юратнă кăларăмĕпе туслашма сĕнет. Кĕçĕннисемпе пĕчĕк заметка, сăвă шăрçалама та хăнăхатпăр пĕчĕккĕн. Ку енĕпе Глеб тăрăшуллă. Çырать те мана тĕрĕслеме парать. Çитес вăхăтсенче унăн ĕçĕсем «Теттере», каярах «Тантăшра» кун çути курасса шансах тăратăп, – ăнлантарать чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ Вероника Трифоновна Дмитриева.

Пушă вăхăтра йăмăкĕсемпе Аделинăпа тата Есенийăпа выляма юратать арçын ача.

– Есения пĕчĕкрех-ха, час ывăнать. Аделина вара йăрă. Эпир унпа ӳкерчĕксем туса сăрлатпăр, çыратпăр. Кĕнекери ача-пăча сăнарĕсемпе те хамах паллаштаратăп. Вăл юнашар вырнаçса ларать, эпĕ сасăпах вулатăп. Нумайччен итлесе ларма хатĕр вăл. «Тата кăштах паллаштар-ха, тархасшăн», – тесе тилмĕрсе ыйтсан каллех алла кĕнеке тытма тивет вара. Йăмăксемшĕн тем тума та хатĕр эпĕ. Çавăнпа та вĕсем мĕн ыйтнине йăлтах пурнăçлама ăнтăлатăп, – çирĕплетет Тарасовсен аслă ачи Глеб.

# Кĕнеке – пирĕн тус!

Татьяна Зиновьевна Степанова библиотекăра чылай çул ĕçленĕрен кашни ача мĕнле произведени вулама кăмăлланине самантрах каласа пама пултарать.

– Вулакан пур-ха, çук мар. Уйрăмах кĕçĕннисем такăрлатаççĕ манăн пӳлĕм умĕнчи сукмака. Килеççĕ те вара: «Татьяна Зиновьевна, иртнинче илсе кайнă кĕнекене алăран ямасăр вуласа пĕтертĕм. Питĕ кăсăклă та интереслĕ пулчĕ. Халĕ те çавнашкаллиех илсе каясчĕ», – тесе шапăлтатаççĕ. Кĕнекисене хăвăрт тавăрса панăран: «Эсир вуламасăрах каялла йăтса килетĕр пулĕ?» – тетĕп вĕсем çине пăхса шӳтлерехххĕн. «Мĕн эсир? Эпир ун пек улталамастпăр. Атте-анне те, вĕрентекенсем те суйни ырă патне илсе çитермест тесе асăрхаттарнине ăшрах тытатпăр. Çавăнпа та эпир ырă та савăнăçлă ачасем», – тесе пĕр-пĕрин çине пăхса йăл кулаççĕ. Пĕчĕккисем, аслисемпе танлаштарсан, çав тери калаçма юратаççĕ. Хăйсем мĕн çинчен вуланине те тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пама хатĕр, – çирĕплет Татьяна Зиновьевна.

Акă чи хастар вулакансенчен пĕри – Диана Радченко. Пур çĕрте те хастарлăхĕпе палăракан хĕрача библиотекăна та хаваспах çӳрет. Килĕшекен кĕнекери сăнарсемпе кăмăлтанах паллашать.

– Çыравçăсен чĕлхипе паллашнă май, ĕнтĕ çывăх çыннăмăрсем çинчен илемлĕ заметка та шăрçалама вĕренетпĕр. Ку ĕçре, паллах, вĕрентекенĕн тӳпи те пысăк. Аслă классем хăйсен сочиненийĕсене вĕренекенсен умĕнче вуланине курнă эпĕ. Кăсăклă хайлава вара пурте тимлĕ итлеççĕ. Малалла мĕн пулать-ши тесе автор çине тĕмсĕлсе пăхаççĕ, – тет хĕрача кăмăллăн.

Марк Морозов та кĕнекесĕр, библиотекăсăр пурăнаймасть.

– Вулани ăс-тăна, тавракурăма анлăлатать. Сăмаха епле çырнине те астуса юлатăн. Е тата сочинени çырма вĕренессине те кĕнекех хăнăхтарать. Çуллахи куна юрататăп та, çав вăхăта сăнлакан хайлавсене килĕштеретĕп. Çыравçă та çав саманта мĕн тери хитре сăмахсемпе çырса кăтартать. Апла пулсан пире кĕнеке сăнама та, пĕр-пĕрне хисеплеме те, вĕренӳре çитĕнӳсем туса пыма та пулăшать. Татьяна Зиновьевнăна вара пысăк тав! Вăл пире куллен ăшă кăмăлпа вулавăшра йышăнать. Илемлĕ литература тупса пама та ӳркенмест. Пире тата мĕн кирлĕ кунран ытла, – хăпартланать Муркаш районĕнчи Сосновка шкулĕн хастар вĕренекенĕ Марк Морозов.



Тантăш 5
16 №, 2015, апрель, 16

# Музей евĕрлĕ шкул

**Красноармейски районĕнчи Карай шкулне çитсен вăл пире тÿрех капăрлăхĕпе тыткăнларĕ. Ăна шалтан та йывăçран каскаласа тунă эрешсемпе илемлетнĕ-çке.**

Шкул çамрăк мар ĕнтĕ, пĕр вăхăт вăл ишĕлсе анас хăрушлăхра та пулнă. Паянхи кун çак пĕлÿ çурчĕ çапла ешерсе ларнинче, паллах, директор тÿпи пысăк. Ăна шăпах вăл «çăлса хăварнă» тесен те йăнăш пулмĕ. 1890 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче уçăлнă шкулта халĕ тăхăр класс вĕренет. Ачасем сахалланнине пула вуннăмĕшсемпе вунпĕрмĕшсем кăçалтанпа урăх шкула çÿреççĕ. Çапах кунта курса тĕлĕнмелли те, тĕслĕх выръне хумалли те чылай-ха. Ĕç вĕресе кăна тăрать пулин те шкул директорĕ Римма Изосимовна Малинина пире «экскурси» йĕркелесе пама вăхăт тупрĕ. Акă эрешлесе капăрлатнă музей алăкне уçса шаларах иртрĕмĕр.

Карай тăрăхĕнчи пĕрремĕш ял 16-мĕш ĕмĕрте йĕркеленнĕ. Кунти ялсем ĕлĕкех Упи чиркÿ прихутне кĕнĕ. Карай ят мĕнле пулса кайнине тĕрлĕрен каласççĕ, вăкăр ячĕ текен те пур.

– Кунти шкул малтан çынсем патĕнче уçăлнă, Сурăмхĕррине пуçланнă. Пирĕн кунта пилĕк Карай ялĕ: Сурăмхĕрри Карай, Кÿлхĕрри Карай, Çĕньял Карай, Çырмапуç Карай тата тĕп Карай. Тĕп Карайра чиркÿ çĕклесен Сурăмхĕрри Карайри шкула кунта прихут шкулĕ пек йĕркеленĕ, – каласа парать Римма Изосимовна.

Çак музея вара шкул 110 çул тултарнă тĕле уçнă иккен. Кунта кам-кам ĕçленине курма пулать. Пĕрремĕш директор – Герасим Степанов. Ун хыççăн çак тивĕçе Илья Яковлевич Яковлев пурнăçлама тытăннă.

Орден илнĕ шкул ĕçченĕсен стенчĕ те пур. Сăмах май, Римма Изосимовна хăй те çак хисепе тивĕçнĕ. Çĕрпÿ районĕнчи Лĕпсер ялĕнче çуралса ÿснĕскер çавăнти шкултах пĕр çул ĕçленĕ, кайран çемье çавăрсан Карай шкулĕнче кĕçĕн классене тăхăр çул вĕрентнĕ. Ун хыççăн маттур вĕрентекен директорăн вĕрентÿпе воспитани енĕпе ĕçлекен заместителĕ пулса вунă çула яхăн тăрăшнă. Халĕ çирĕм икĕ çул ĕнтĕ – директорта.

## Мухтанмалăх пур

Çак тăрăхран сахал мар паллă çын тухнă. Николай Карай поэт, чăваш эстрада артисчĕ Владимир Леонтьев, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчи пĕччен юрлас ăсталăх кафедрин доценчĕ Владимир Егоров, Николай Егоров ÿнерçĕ... Пурне те калаймăн.

– Шупашкарти Оперăпа балет театрĕнче пирĕн Анатолий Владимирович Ильин режиссер пулса ĕçлет. Унпа эпир тачă çыхăну тытатпăр, – хавхаланса калаçать Римма Изосимовна. – Нумаях пулмасть ачасемпе «Марийка» оперетта кайса куртăмăр. Çавăн пекех пирĕн вĕренекенсем Çĕнĕ çул елкине те хутшăнчĕç. Халĕ апрельте шкулĕпех «Нарспи» курма каясшăн-ха.

Паллах, укçа ыйтăвĕ кирек хăçан та çивĕч тăрать. Юрать-ха, Карай шкулне ку тĕлĕшрен пулăшакансем пур. ЧР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ



В.Н.Платонов апат енчен те чылай пулăшу кÿнĕ.

Районта пĕртăван Григорьевсен ăмăртăвне ирттересси йăлана кĕнĕ. Валерий, Вениамин, Александр, Андрей тата Вера тăтăшах йĕлтĕр тупăшăвĕсем йĕркелеççĕ. Карай шкулне те манмаççĕ вĕсем, йĕлтĕрсемпе тивĕçтереççĕ. Пултаруллă та маттур ентешĕсемпе мухтанаççĕ Карайсем.

## Чун пирки шухăшласчĕ...

«Илемлĕ хайлав – чун апачĕ», – теççĕ. Литература пирĕншĕн чун тухтăрĕ евĕрех-çке. Ку çулталăка Раççейре литературăна, Чăваш Енре Константин Иванов классикăмăра халаллани те ахаль мар. Çак паллă пулăмпа çыхăннă мероприятисем Карай шкулĕнче те анлă иртеççĕ.

Акă ÿкерчĕксен куравне асăрхарăмăр. Ăна та Литература çулталăкне халалланă. Ачасем конкурса питĕ хастар хутшăнаççĕ. Хайсен ĕçĕсенче пуян сюжет кăтартса параççĕ. Ку тĕлĕшрен шкул вулавăшĕ те аван ĕçлет, Рената Георгиевна Порфирьева тăтăшах тĕрлĕрен акци ирттерет.

Литературăна халалланă конкурссем тата чылай ирттерме палăртнă-ха. Вĕрентекенсен те, ачасен те ахаль ларма вăхăт çук.

## Çĕнтерÿ патне туслăн утсан чăрмавсем сирĕлеççĕ

Шкулта пахча ĕçĕ лайăх аталаннă. Çуркунне çитсенех вĕрентекенсемпе ачасем ĕçе пуçăнаççĕ. Çак çулсенче





шкул чечек ÿстерессипе, хитре тавралăхпа районта тăтăшах мала тухать. Кăçалхи хĕлле вара юр кĕлеткесен конкурсĕнче те çĕнтернĕ. Конкурс йĕркелÿçисем Карай шкулĕ умĕнче юртан ăсталанă Хĕл Мучие, Юр Пикене, кашкăра, качакана, упана тата ытти тĕлĕнтермĕш кĕлеткене курсан тĕлĕнмесĕр чăтаймаш. «Кăçал юр та нумаях мар-çке. Ăçтан тупрăр çакăн чухлĕ?» – тесе ыйтнă вĕсем. Кунта вара çак хуравран тĕрĕсрехх мĕн пултăр ĕнтĕ – çĕнтерÿ патне туслăн утсан чăрмавсем сирĕлеççĕ.

Çак шкултах тепĕр кăсăклă вырăн пур – Ĕмĕрлĕх çулăм.

– Ăна эпир çулсеренех Çĕнтерÿ кунĕнче вăрçă паттăрĕсене аса илсе çутатпăр, – ăнлантарать Римма Изосимовна. Кунтах Афганистан, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçисенче çапăçнă паттăрсен сăнÿкерчĕкĕсенчен хатĕрленĕ стенд та пур.

## Пĕтĕмпех çĕнĕлле

Паянхи пурнăç çĕнĕллех ыйтать çав. Кĕçĕн классене те ноутбукпа, принтерпа пуянлатнă халь. Унчченхи пек доска çинче те мар, пĕтĕмпех экран çинче ăнлантарать вĕрентекен.

Иртнĕ çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче кунта шкул çулне çитменнисене валли ача сачĕ уçнă. Унта çирĕм ача çÿрет. Пÿлĕмĕсене хулари пекех ăсталанă-çке, пĕтĕмпех илемлĕ. Ачасем кунта ăшăлăха туяççĕ.

– Çак ĕçе пурнăçлама район бюджетĕнчен 400 пин пачĕç, республикăран вара - икĕ миллион. Олег Иванович Степанова та укçа-тенкĕ енчен пулăшнăшăн пысăк тав. Çавăнпа садике те хăвăртах хута ячĕç. Кайран вăл пире тепĕр пысăк парнепе савăнтарчĕ – кĕпе çумалли машина парса хăварчĕ.

## Яковлев та, Иванов та, Çеçпĕл те...

Шкулта «Яковлев хунавĕсем» организаци ĕçлет. Вĕсен хăйсен юрри те пур. Кунта çÿрекенсем тимуровецсем пекрех. Çынна пулăшасси вĕсемшĕн – малти вырăнта. Мĕнле ырă ĕç тунине пĕтĕмпех çырса пыраççĕ.

Вĕренекенсем лайăх кăтартусемпе савăнтараççĕ. Районта иртterекен предмет олимпиадисенче тăтăшах малти вырăнсене йышăнаççĕ.

– Пирĕн шкул «Зарницăна» хутшăнса Шупашкарта район чысне хÿтĕлерĕ. Халĕ Çĕнĕ Шупашкарта та палăрчĕç. Маттур ачасемпе яланах савăнатпăр. Вĕсене кура кĕçĕнреххисем те тăрăшаççĕ, – тет Римма Изосимовна.

Чăваш чĕлхи кабинетне кĕрсен вара хăвна галерейăри пек туятăн. Кунта кирек кам та тÿрех стена çинче сăнланă Иван Яковлева, Константин Иванова тата Çеçпĕл Мишшине асăрхĕ, шухăш авăрне путĕ. Чăваш литературинче тарăн йĕр хăварнă çынсем çамрăк ăрăва сăнасах тăраççĕ тейĕн. Çак пысăк ăсталăхлă ÿкерчĕксене Валерий Германович Скворцов художник тата Изосим Антонович Антонов черчени учителĕ тунă.

Шкул столовăйĕнчен тутлă та техĕмлĕ апат шăрши тухать. Кунта ĕçлекенсем чунри ырă туйăмĕсене хăйсем хатĕрлекен апатра кăтартса парасшăн тейĕн. Ачасене кунне икĕ хутчен çитереççĕ. Ирхине – вĕри пăтă, запеканка, чей. Кăнтăрла вара – яшка, пăтă тата салат. Садике çÿрекенсене кунне виççĕ çитереççĕ. Ирина Николаевна Прохорова поварпа унăн пулăшуçи Ольга Витальевна Иванова апатне питĕ тутлă пĕçереççĕ. «Витязь» магазин хуçи В.Н.Платонов кирлĕ таварпа яланах тивĕçтерет.

Шкул совечĕ лайăх ĕçлет. Унăн ертÿçи – Лариса Николаевна Куприянова. Ашшĕ-амăшĕпе тачă çыхăну тытасси йăлана кĕнĕ. Чылай пĕлтерĕшлĕ ыйтăва пĕрле сÿтсе яваççĕ, пĕр-пĕрне куçран пăхсах ăнланаççĕ.

Халĕ шкул тăрăшсах юбилея хатĕрленет, çитес çул вăл 125-ре пулĕ-çке!



**Нина ЦАРЫГИНА** сăнÿкерчĕкĕсем.

# Йышпа ĕç тума аван



Вăрнар районĕнчи Вăрнарти 2-мĕш шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Вероника Трифоновна Дмитриева – ачасен юратнă вĕрентекенĕ. Уроксенче çыравçăсен хайлавĕсене вуласа хак панисĕр пуçне, учитель пулăшнипе хăйсем те заметка çырма вĕренеççĕ çамрăксем.

Вероника Трифоновна Хирпуç ялĕнче пилĕк ачаллă çемьере çитĕннĕ. Асли пулнă май ытларах ĕçĕ те ун çине тиеннĕ. Килтине те, колхоз уйăрса панă пахча-çимĕçе те çумкурăкран тасатнă вăл шăллĕсемпе. Кирек епле ĕçре те пĕри те кахалланса тăман.

Кунĕпе пахчара кăштăртатса ывăннине пăхмасăр Вероника каç енне урама тухнă. Пура ăшĕнче уяв-концерта тăрăшса хатĕрленекен юлташĕсем патне хапăлласа хутшăннă. Касри халăха спектаклĕсемпе те пĕрре мар савăнтарнă çак туслă йыш. Çакăншăн уйрăмах кинемейсем хĕпĕртенĕ.

– Ах, Шупашкарти артистсене час-час кураймасан та, хамăр ачасемпе мăнукăмăрсем те вĕсенчен пĕрре те кая мар выляççĕ-çке. Ачамсем, сирĕн пурнăçăр яланах тӳрĕ çулпа чуптăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçа кĕтĕр. Пире çапла савăнтармалли вăхăт та тупсах тăрăр. Тен, сирĕнтен хăшĕ те пулин артиста вĕренсе тухĕ, – тенĕ хайхискерсем çамрăксене хавхалантарса.

Шкул вĕренсе пĕтерсен Вероника артист пулас темен, педагог профессине килĕштернĕрен Шупашкара çул тытнă...



Паян Вероника Трифоновна 6-мĕш класс ертӳçи.

– Ачасемпе ĕçлеме питĕ килĕшет. Хама шанса панă ĕçе пĕтĕм кăмăлтан пурнăçлатăп. Тепĕр чухне пуçра сăвă йĕркисем çуралаççĕ те тӳрех тетраде çырса хуратăп. Литература енне туртăнакан арçын ачасемпе хĕрачасене сăвă шăрçалас вăрттăнлăхпа паллаштаратăп. Вĕсем те илемлĕ сăмахсемпе усă курса çырма пуçăнчĕç. Ĕçĕсене çитес вăхăтра редакцие ярса парас тĕллевлĕ-ха, – тет хастар педагог.

## Наташа

Çиччĕмĕш кадет класĕнче вĕренекен Наташа Ефремова юратнă педагогĕ Вероника Трифоновна хавхалантарнăран темиçе сăвă шăрçалама та ĕлкĕрнĕ.

– Малтанах «пиççе» çитейместчĕç ĕçĕмсем. Кулянаттăм. Вероника Трифоновна ырă сăмахсем тупса кăмăла çавăрма пĕлетчĕ. «Хыпаланма кирлĕ мар, васкамасăр, шухăшласа çырмалла пуçра çуралнă йĕркесене», – тетчĕ час-часах. Унăн сĕнӳ-канашĕ пире йывăрлăхран тухма пулăшатчĕ, халĕ те çавах, – тет вĕренӳ отличникĕ хавассăн.

Наташа юрист пуласшăн. Çавăнпа уншăн вĕренӳ – пĕрремĕш вырăнта. Пушă вăхăтра кĕнеке вулать, юрă-кĕвĕ итлет. Çыхасси те уншăн чун иленĕçĕ. Ӳкерме те ăста. Паянхи кунччен тата миçе çемçе тетте çĕлемен-ши вăл? Уйрăмах вĕсене тус-юлташĕсене парнелеме кăмăллать.

Аслисене яланах хисеплемеллине асра тытса Наташа кинемейсемпе мучисене те пулăшма çӳрет.

– Эпир пырсан мĕн тери хĕпĕртеççĕ вĕсем! Тепĕр чухне кучченеççĕр те кăларса ямаççĕ. Яланах ырă сунса ăсатаççĕ пире. Тата та килсе çӳреме ыйтаççĕ, – тет Наташа.

## Люба

Чăваш чĕлхине юратакан Люба Дмитриевăн юратнă вĕрентекенĕ Вероника Трифоновна. Урокра педагогăн кашни сăмахне тимлĕ итлет вăл, яланах çĕннине пĕлме тăрăшать. Пĕр-пĕр произведени вуласан, ăна тишкерсе хак пама кăмăллать.

– Алла кĕнеке тытсан... унти ĕç-пуç ялпа çыхăннăтăк... Эпĕ вара шухăш-ĕмĕтĕмпе йăлтах хамăр тăрăха, Кĕçĕн Кипеке, васкаса вĕçетĕп... Акă кил умне çитсе тăрататăп... Чун сӳ! тăвать. Алăка питĕрнĕ çăрана алăпа шăлса илетĕп. «Пĕчченех кун-кунлатăн эсĕ, пирĕнсĕрех. Ан кулян, çуллахи каникула киле таврăнатпăрах», – тесе юратнă çуртăн чӳречисем еннелле хурлăхлăн тĕмсĕлсе пăхатăп. Акă тата та тата йĕри-тавралла тинкеретĕп. Эх, пуш-пушă картиш мана нимĕнпе те савăнтарма пултараймасть иккен. Темиçе çул каялла апла марччĕ. Ĕне çӳретчĕ кунта... Ĕнтĕ халĕ ĕне мар, кушак та, йытă та çук. Шел, питех те шел... Çапла кам та пулин пырса сăмах хушмасан, сӳтĕлет те сӳтĕлет шухăш çăмхи... Çапах та эпĕ хамăр тăрăха çав тери юрататăп, тăван килшĕн тунсăхлатăп. Эх, çуллахи каникула тӳрех Кĕçĕн Кипеке вĕçтерĕпĕр, – тет Люба хăпартланса.

Мал ĕмĕтлĕ Люба тухтăр пуласшăн. Йывăр вăхăтра çынсене пулăшу парасшăн.

– Асанне çулне суйлас тетĕп. Вăл та хăй вăхăтĕнче халăха чир-чĕртен сыватнă, – пĕлтерчĕ шухăшне улттăмĕш класра вĕренекен хĕрача.

## Юра

Юрий Сергеев – спортпа туслă. Даниил пиччĕшĕ пекех. Хĕллесерен вĕсем иккĕшĕ йĕлме йĕлтĕр сырса ăçта кăна çитмеççĕ-ши? Çавăнпах тăр арçын ача физкультура урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтет.

– Эпĕ Çĕрпел ялĕнчен. Вăрнара вĕренме çӳретĕп. Кун епле иртсе кайнине те сиссе юлаймастăп тепĕр чухне. Ирех шкула тухса каятăп та каç енне çеç киле таврăнатăп. Вырсарникун – чи юратнă кун. Кунĕпех килте. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕхпе пулма юрататăп, – хăпартланать Юра.

Чăваш чĕлхи урокĕсене те кăмăлтан çӳрет арçын ача.

– Вĕрентекенĕн кашни сăмахне ăша хыватăп, килти ĕçсене те юратса пурнăçлатăп. Ӳссен пысăк çын пулас килет манăн, – палăртать хăй шухăшне хастар арçын ача.

## Эмилия

Эмилия Тарасова – вĕренӳ отличникĕ. Пур предметпа та «5» паллăпа ĕлкĕрсе пыраканскер çав тери вулама юратать.

– Кĕнекепе туслă çыннăн çеç тавракурăмĕ анлă. Çавăнпа та эпĕ пурне те вулавăша çӳреме чĕнсе калатăп, – тет Эмилия.

Хĕрача пушă вăхăтра ӳкерме юратать, шурă хут çине вăл темле сăнара та куçарать. Йытă, кушак, ĕне, чăх-чĕп... тата ытти чылай чĕрчун пур унăн альбомĕнче.

– Хăш чухне, кăмăл аван вăхăтра, кунĕпех ӳкерсе ларма хатĕр эпĕ. Ӳссен, тен, художник пулăп-и? Тен... Пĕлместĕп-ха, унччен шухăшăм та улшăнма пултарĕ тата, – çирĕплетет хĕрача.

## Урокра

Чăваш чĕлхи урокĕнче тĕрĕс çырма тăрăшатпăр, кăсăклă та интереслĕ текстсем вулани кăмăла хăпартлантарать. Нумаях пулмасть эпир урокра паллă писатель, хамăр ентешĕмĕр Мĕтри Кипек çырнă «Кайăк тусĕ» хайлавпа паллашрăмăр. Текстри тĕп сăнар – Алеша. Вăл пушă вăхăтра юмахсем, сăвăсем, калавсем çырать. Тата кайăксем валли сырăшсем тума та питĕ ăста. Эпир те хастар арçын ачаран тĕслĕх илтĕмĕр. Кайăксем валли сырăшсем ăсталарăмăр. Вĕсене пĕр тăхтамасăр йывăççем çине çакрăмăр. Унта çăкăр тĕпренчĕкĕсем, кĕрпе хутăмăр.

– Кайăксем – пирĕн туссем! Вĕсене пирĕн пулăшмаллах, – тесе çирĕплетрĕмĕр.

Эпир кайăксене çав тери юрататпăр. Вĕсем пирĕн парнесемшĕн савăнасса шанса тăратпăр.

**Кирилл АРХИПОВ.**

## Çĕнтерӳллĕ май

Çитмĕл çул ытла та иртрĕ,
Çĕнтерӳллĕ май асрах.
Çирĕм пĕрмĕш ĕмĕр те çитрĕ –
Вăрçă халăхшăн чунрах.
Эпир киносем куратпăр
Вăрçăри кун-çул çинчен.
Кулянатпăр, савăнатпăр
Паттăрсем киле çитсен.
Кукаçи Сталинградра
Пуçне хунă çапăçса.
Асатте, вăрçа Брестра
Кĕтсе илнĕ шар курса.
Йывăр сурана пула
Тăшман алне çакланнă.
Туссем тăрăшнине пула
Унтан тарма пултарнă.
Вăрçă хуйхи кашни килте
Çав çулсенче тĕпленнĕ.
Ача-пăча та пур çĕрте
Нушапала тертленнĕ.

**Мальвина МИТРОФАНОВА.**



*Семен ПАНЕВИН* (Çĕрпӳ районĕ, Тавăшкасси) *ӳкерчĕкĕ.*

## Хăват

Пĕлейместĕн пурнăçра:
Хăш çулпа-ши утмалла...
Тупăнаççĕ тумхахсем,
Такăнаççĕ урасем,
Тĕттĕмленеççĕ кунсем,
Çухалаççĕ çăлтăрсем
Куççем йĕпенеççĕ,
Ĕмĕтсем сӳнеççĕ.
Епле пулсан та, тăван,
Хуçăлсах, эс, ан хурлан.
Тĕттĕм каçĕ те çуталĕ
Сар хĕвелĕ йăл! йăл! кулĕ.
Ырă çынсем тупăнĕç,
Ăш сăмахпа йăпатĕç.
Турă парĕ ик çунат
Туйса илĕн эс, хăват.



*Диана ЕНЦОВА* (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Карапаш) *ӳкерчĕкĕ.*

## Манас марччĕ...

Пуранна чухне çĕр çинче
Мĕн çитмест-ши этеме?
Кăшкăратпăр пĕр-пĕрне,
Ăмсанатпăр кӳршĕне.
Упраймастпăр туссене,
Кĕвĕçетпĕр мăшăра,
Хакламастпăр пурнăçа.
Çухатсассăн çеç тинех
Тытăнатпăр хурланма,
Пуçа хыçма, ӳкĕнме!
«Чавса çывăх çыртма çук», –
Тенĕ ĕлĕк ваттисем.
– Чăн сăмахăн суйи çук, –
Манас марччĕ, тăвансем.
Пуранна чух çĕр çинче
Упраясчĕ аттене,
Хĕрхенесчĕ аннене.
Эпир вĕт-ха, çĕр çине
Килнĕ теççĕ хăнана.
Çавăнпа та хăнара
Пурăнасчĕ кăмăлпа,
Манас марччĕ çынлăха.
Япăххи те, лайăххи
Ялан юнашар çӳрет.
Пуранна чух çĕр çинче
Тем те пулать этемпе.
Пĕри çĕнĕ чун тупать,
Тепри тусне çухатать.
Тепри мулшăн çапăçать,
Чĕрĕскере пытарать.
Веçех чăтса иртерме
Çӳлти Турă, сывлăх пар!
Тĕрĕс çул çине тăма,
Ыр кун-çулпа савăнтар
Усал-тискере сирсе
Çутă ĕмĕт парнеле.



*Юля КУЗЬМИНА* (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) *ӳкерчĕкĕ.*

## «Симĕс çĕлен»

Урамра ача макрать,
Сасси чĕрене çурать.
Унта-кунта пăхкалать:
Амăшне-çке вăл шырать.
«Мĕншĕн эсĕ, аннеçĕм,
Кайрăн мана пăрахса?
Çамрăк чĕрӳ сан, чĕкеçĕм,
Маншăн хыпмасть-ши çунса?
Мĕн эп йăнăш турăм-ши,
Кама кӳрентертĕм-ши,
Йăнăш килтĕм çĕр çине,
Ытлашши эп пултăм-ши?
Кирлĕ мар эп аннене,
Савăнтармас аттене.
Манăн çук юратнă тус,
Кĕсьере пĕр пус та çук...»
Унăн амăшĕ ăçта?
Кам калать-ши, тăвансем?
Ачан амăшне вара
Ярса илнĕ «симĕс çĕлен».
«Симĕс çĕлен» ăнсăртран
Сăхса илет çынсене.
Пит усал, хаяр суннăран
Хĕрхенмест вăл чунсене.
Аркатать çемьесене,
Макăртать ачасене,
Пăтратать çамăрксене
Тĕп тăвать ĕмĕтсене.
Кам тытать-ши çĕлене,
Мĕнле çулне пӳлмелле?
Камран пулăшу ыйтар
Çак тăшманран хăтăлар.

## Чун ыратăвĕ



*Юля КУЗЬМИНА* (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) *ӳкерчĕкĕ.*

Кĕлчечекĕ эпĕ лартрăм,
Ӳстĕр терĕм пуль.
Кашни кун ăна шăвартăм,
Çеçкелентĕр терĕм пуль.
Кĕлчечек манăн хăрмарĕ
Ӳсрĕ кунран-кун.
Тĕрекленчĕ, пуç усмарĕ,
Çеçке çурчĕ ăшă кун.
Пит илемлĕ, сар хĕвел пек
Ăшăтать ман чунăма.
Калаçатăп, йăл кулатăп
Эпĕ ун çине пăхса.
Ак пĕр кунхине васкарăм
Хам «хĕвел» патне.
Анчах эп ăна курмарăм,
Çулçисем çеç çĕр çинче.
Çын-и, эс, этем-и, эс?!
Мĕнле хăйрăн тĕкĕнме,
Çеçке çурнă чечеке
Тымарĕпе пĕтерме?
Укçу çук-и, эс кахал-и?
Кайса ил те пасара,
Лартса пăх ху пахчуна –
Пĕлĕн тин ман хурлăха.
Суханне те йăтса кайрăн,
Хăярне те тиркемерĕн,
Купăстана хăвармарăн, –
Çиех, эсĕ выçă пуль.
Чĕре сурчĕ, чун ыратрĕ,
Шăпăртатрĕ ман куççуль.
Чунсăррисем пурришĕн,
«Сар хĕвел» сӳннишĕн.

## Юлташсем

Алăкран такам шаккарĕ,
Уçрăм алăка.
Телей тăрать ман умра,
Кĕртрĕм хамăн пурнăçа.
Урамра эп сасă илтрĕм,
Уçрăм кантăка.
Сывлăх ал сулать мана,
«Кăчăк туртрăм» хам пата.
Темле вăйлă туйăм
Манпа хуçаланчĕ,
Чĕрене хускатрĕ,
Кунтах вырăн тупрĕ.
Телей, сывлăх, юрату
Пулчĕç манăн юлташсем.
Сирĕн пата та, туссем,
Тупчăр çул çак «юлташсем».




*Владлен АЛЕКСЕЕВ* (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Карапаш) *ӳкерчĕкĕ.*

## Асамçă

Эп асамçă пулнă пулсассăн
Чĕртсе лартăттăм, аннеçĕм, сана.
Юмахлăттăм, аттеçĕм, санпа,
Сыватăттăм мĕн пур сусăра.
Эп асамçă пулнă пулсассăн
Парнелĕттĕм телей çынсене,
Сирĕттĕм çĕр çинчи инкеке,
Пур ачан та пулĕччĕ çемье.
Эп асамçă пулнă пулсассăн
Ярса илĕттĕм «симĕс çĕлене»,
Хыттăн пăвса хурăттăм мăйне,
Ывăтăттăм инçете-инçете.
Эп асамçă пулаймастăп,
Атте-аннене чĕртейместĕп.
Çĕр çинчи мĕн пур усала
Çĕнме пулать, туссемĕр, ырăпа...

**Вероника ДМИТРИЕВА, вĕрентекен.**



*Наталья САРБАЕВА* (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Карапаш) *ӳкерчĕкĕ.*

ПУЛТАРУЛӐХ

# Вӗрентекен, куҫаруҫӑ, поэт...

Алексей Афанасьев пултарулӑхӗпе пӗлтӗрхи июль уйӑхӗнчех кӗскен паллаштарнӑччӗ тантӑшӑмӑрсене. Тутар Республикинчи Павлӑ районне кӗрекен Тӑмпарлӑ ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Алексей Андриянович. Ачаранах кӗнекепе туслашнӑскер кайран та унран сивӗнмен. Интереслӗ хайлавсем вуланипе ҫеҫ ҫырлахса ларман вӑл. Тӗрлӗ хаҫат-журнала хӑй те сӑвӑ-заметка шӑрҫаланӑ. Вӑл шутра – «Пионер сассипе» /халӗ «Тантӑш»/ «Хатӗр пула» /халӗ «Самант»/ та.

Самани йывӑр пулнине пӑхмасӑр малаллах туртӑннӑ, вӗренме ӗмӗтленнӗ Алексей Андриянович. Учитель профессине алла илсе чылай ҫул шкулта тӑрӑшнӑ. Ҫитӗнекен ӑрӑва пӗлӳ тӗнчипе паллаштарнӑ. Ҫак хушӑра та ҫырма пӑрахман, кӗнекесем пичетлесе кӑларнӑ. Кунсӑр пуҫне тӑлмачӑ пек те палӑрнӑ: Константин Ивановӑн «Нарспи» поэмине, Александр Алкан «Шыв арманӗ» легендине, Петр Осиповӑн «Айтар» драмине удмуртла куҫарнӑ.

Юпа уйӑхӗн 19-мӗшӗнче Алексей Афанасьев ҫуралнӑранпа 90 ҫул ҫитет. Ҫавна май поэтӑн пултарулӑхӗпе сывӑхрах паллаштарасшӑн эпир сире. Унӑн сӑввисем ансат та ӑнланмалла, ҫав хушӑрах сӑнарлӑ та илемлӗ. Кашнинчех пысӑк шухӑш пытаранӑ. Ҫутҫанталӑка ҫивӗч туять автор. Малтанхи йӗркесене вуласассӑнах эсир те ӑнкарса илейӗр ҫакна.

АЛЕКСЕЙ АФАНАСЬЕВ

## Шӑнкӑрч

Хураскер, шӑрҫаллӑскер,
Ҫунатне ҫапа-ҫапа
Ир-ирех юрлать чипер
Тӗрлӗ-тӗрлӗ сасӑпа.



Шӑхӑрса пӗрре ярать,
Хӗлӗх пек янрать ҫинҫе,
Чаклатать, шӑнкӑртатать
Урамри йӑмра ҫинче.

Шӑнкӑрч, шӑнкӑрч, шӑнкӑртат!
Янӑрат-ха таврана!
Юрласа пире кӑтарт
Чи юратнӑ юрруна.

Кил енне пӑха-пӑха
Тунсӑхларӑн пуль ютра.
Яр уҫатӑп кантӑка
Эс юрланӑ вӑхӑтра.

Савӑн, савӑн ирхине
Йӑвуна кӗре-кӗре.
Ху пекех чӗппӳсене
Час вӗҫтерӗн ирӗкре.

## Улатакка

Вӑрман ирех вӑраннӑ,
Мулкач шырать сукмак.
Таккарӗ телеграмма
Улатакка тӑк-так!..

Улатакка шаккарӗ
Мӗнпур енне хыпар:
– Хаяр хӗл иртсе кайрӗ,
Хуралчӗ тарӑн вар...

Кӗтетпӗр. Килӗр! Килӗр,
Ҫурхи хӑнамӑрсем!
Хуҫасӑр сирӗн килӗр
Пит тунсӑхлӑ, кичем.

Хура курак ҫуначӗ
Ана пекех хура.



Хӑпарту пек пӑсланчӗ
Хӗвел ҫинче тӑпра.

Кӗтетпӗр. Килӗр, килӗр,
Ҫунатлӑ хӑнасем!
Шыв урлӑ, пӗлӗт витӗр
Выртаҫҫӗ ҫулӑрсем.

Вӑрман ирех вӑраннӑ,
Каять сас аякка.
Васкавлӑ телеграмма
Таккать улатакка.

## Хӗллехи вӑрман

Йӑлтӑртатать автан хӳри пек
Пасарнӑ хурӑн туратти.
Ҫиҫет асамлӑ юмахри пек
Хӗвел ҫинче мерчен ҫути.

Хӗл хитрипе хӗрелнӗ уйӑп –
Кӗрхи садри анис улма.
Ҫӳлте шӑнса пӑрланнӑ уйӑх
Анса ларасшӑн айлӑма.

Вӑрман ҫи-пуҫӗ – ҫутӑ пурҫӑн,
Пӗркеннӗ шупӑр тунката.
Эс тӗлӗнсе пӑхса тӑруҫӑн
Пӑшал сасси янрать таҫта...

Вар шӑплӑхне вӑратрӗ йытӑ –
Чупать, сикет пута-пута.
– Мулкач! Мулкач! Чупсамччӗ
хытӑ! –
Тесе каласшӑн тунката.

УЯВ

# Ырӑ шанӑҫ пиллекен чечек



Ҫулсеренех ака уйӑхӗн 19-мӗшӗнче чылай ҫӗршывра Ҫеҫпӗл чечекӗн кунне паллӑ тӑваҫҫӗ. Ку уяв тымарӗсене Англире шыраmalla. Ӑна ирттересси пирки ҫирӗплетекен йышӑнӑва 1984 ҫулта шӑпах кунта алӑ пуснӑ.

Хӑш климатра ӳснине кура ҫеҫпӗл январь-апрель уйӑхӗсенче ҫурӑлать. Аслӑ Британире вара ака уйӑхӗн варринче ҫеҫкене ларать. Ҫавӑнпа уява ҫак вӑхӑтра, хӗвеллӗ те ӑшӑ кунсен тата ҫуркуннен пуҫламӑшӗпе, ҫыхӑнтарнӑ. Каярахпа ӑна палӑртасси ытти ҫӗршывра та анлӑ сарӑлнӑ.

Англире ҫеҫпӗле питӗ юратаҫҫӗ. Халӑхри ӗненӳ тӑрӑх, кил-ҫурт тавра лартнӑ ҫак чечексем хуҫисене усалсенчен сыхлаҫҫӗ. Ҫапах та ҫеҫпӗл – чӗрӗлӳпе ҫӗнтерӳ символӗ. Хӗллехи сивӗсем хыҫҫӑнах тухаканскер ҫуркунне ҫитнине систерет, ырӑ шанӑҫ пиллет. Голландире тюльпансене пысӑк тимлӗх уйӑрнӑ пекех Аслӑ Британире ҫеҫпӗлсене ятарласа лартаҫҫӗ.

Ҫеҫпӗлӗн латинла ячӗ – «галянтус» – сӗт чечекӗ. Ку ӳсен-тӑран малтанхи пинҫуллӑхранах паллӑ. Вӑтам ӗмӗрсенче ӑна тасалӑх символӗ пек хакланӑ. XIX ӗмӗрте вара чылай ҫӗрте ӳстерме пуҫланӑ. Паянхи кун тӗнче ҫеҫпӗлӗн 20 тӗсӗ пуррине палӑртаҫҫӗ. Шел те, чылайӑшӗ ҫутҫанталӑкра сахалланса юлнӑ. Ҫавӑнпа вӗсене Хӗрлӗ кӗнекене кӗртнӗ. Анчах шелсӗр чунлӑ ҫынсем ҫакӑн умӗнче те чарӑнса тӑмаҫҫӗ. Ҫуркунне ҫитмессерен вӑрмана танккаҫҫӗ, илемлӗ ҫеҫпӗл чечекӗсене татса сутма тухаҫҫӗ. «Ыйтнине кура – сӗнӗвӗ», – теҫҫӗ. Эппин, ҫутҫанталӑка сӑтӑр кӳрекенсене хавхалантарас марччӗ, ҫепӗҫ ҫеҫкене туянса вӗсен йышне кӗрес марччӗ. Килес ӑрусем ӑна ӳкерчӗксенче ҫеҫ ан курччӑр тесен паянах тимлӗ пулмалла. Пуласлӑх пирӗн алӑра-ҫке-ха.

ЧУН ЫРАТӐВӖ

# Ҫеҫпӗл пӑшӑлтатӑвӗ



«Эпӗ – ҫеҫпӗл... Ҫепӗҫ ҫурхи чечек. Вӑрантӑм, куҫа уҫрӑм. Ыталаҫҫӗ мана хӗвел шевлисем. Кайӑксем те чӗрӗлӳ юрри шӑрантараҫҫӗ: «Салам, ҫеҫпӗл! Ҫуркунне... Ҫӗнӗ пурнӑҫ... Ҫӳлелле...» Вӑтанатӑп пуҫа ҫӗклеме, халӑм ҫитеймесрен шикленетӗп. Анчах ӑшӑ ҫутӑ вӑй-хӑватпа тӗрек парать. Ман тавралла юр ҫук ӗнтӗ. Пӗтрӗ, юхрӗ, сӑрхӑнчӗ, тымарӑма шӑварчӗ. Курӑк та хӗл ыйхинчен вӑранчӗ. Пӗтӗм тӗнче ешерет. Ах, епле телейлӗ-ҫке эпӗ! Пурӑнатӑп ҫак тӗлӗнмелле асамлӑ вӑхӑтра».

Таҫтан шӑхӑрса килчӗ ҫил. «У-у-у!» – улаҫҫӗ ҫил ачисем. «Ай-ай, ирех савӑнтӑм-ши вара? Ӑҫта чикес-ха черченкӗ пӗвӗме? Мӗнле упрас симӗс ҫулҫа? Сивӗ-ҫке... Пӗр самантра пӗтсе ларма ҫитӗнтӗм-ши? Ан вӗлерсем мана, хӑватлӑ вӑй! Хӗрхен! Ан вӗлер!»

Ҫӗр ҫумӗнчи чечек йӑлӑннине илтрӗши ҫил? Е вӑрман каллех пушанса юласран хӑрарӗ? Анчах мӗнле сасартӑк килчӗ, ҫавӑн пекех ҫухалчӗ.

Шатӑрт! турӗ аякри йывӑҫ турачӗ. Кайӑксем шуйханса тӳпенелле хӑпарчӗҫ.

Тӑрна куҫӗ тӗслӗ чечек те «пуҫне» ҫӗклерӗ. Вӑрман ҫинчех ҫакӑнса тӑратьҫке хура пӗлӗт. «Ҫунатлӑ тусӑмсем, хӑваласа ярӑр ӑна кунтан! Ан килтӗр тек пирӗн пата». Ҫук, илтмеҫҫӗ те тейӗн ҫепӗҫ сасса.

– Хам-хам! Хам! – илтӗнчӗ ҫывӑхрах.

– Ай-уй, йытӑ вӗт ку! – пӗтӗм пӗвӗпе чӗтренсе илчӗ ҫеҫпӗл.

Хӑйне кӗттермерӗ анчӑк. Пушӑ та тӗттӗм вӑрманта лӑпӑстатса ҫӳресе ывӑннӑскер илемлӗ чечеке тӳрех асӑрхарӗ. Хӳрине вӗлтӗр-вӗлтӗр пӑтратса чупса пычӗ. Шӑршласа пӑхрӗ, ҫыртасшӑнччӗ. Анчах ӑна ҫав вӑхӑтра хуҫи чӗнсе илчӗ. Лӗпӗс-лӗпӗс вӗҫтерчӗ вӑл сасӑ еннелле.

Шатӑрт! хуҫӑлчӗ каллех турат. «Этем», – мӗлтлетрӗ шухӑш самантрах.

Хӑрушӑ чун... Пӗлмест вӑл шелleme. Килет, хуҫаланать. Хӑй кунта хӑна ҫеҫ пулнине пӗлмест те, пӗлесшӗн те мар.

Ҫывхарсах килет, ура сасси илтӗнет. «Кӑчӑрт-кӑчӑрт», – ашать кайса пӗтмен юра. «Чӑштӑр-чӑштӑр», – таптать тӗллӗнтӗллӗн ҫӗр тухнӑ вырӑнсенчи пӗлтӗрхи ҫулҫӑсене.

«Ҫапла ман пулчӗ-ши шӑпам? Темиҫе кун капӑр кӗленче савӑтра лартассишӗн килне илсе кайӗ-ши этем? Хӑнасен умӗнче мухтанӗ, илемӗмрен тӗлӗнӗ. Юлашкинчен урама, ҫӳп-ҫап купи ҫине кӑларса ывӑтӗ. Ах, хитрелӗхе хаклама пӗлмест ҫын. Илем савӑтра мар вӑл. Шӑпчӑк та юрламасть ылтӑн читлӗхре. Мӗне кирлӗ вӗсем?»

Акӑ, ҫитрӗ... Епле кулать?! Шӑлӗсем шап-шурӑ... Аллине ҫеҫпӗл патне тӑсать. Пӑрӑнать, авӑнать чечек. Этем, ан вӗлер! Ан вӗлер черченкӗ чуна!

Ҫат! татӑлать ҫуркуннехи пӗрремӗш ҫеҫке. Йӑр! юхса анать сӗр ҫине куҫҫуль, ҫеҫпӗл куҫҫулӗ...

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Çурхи кун илемĕ

Çурхи кун илемлĕ,
Çутă та хĕвеллĕ.
Анчах çумăрĕ çăвать,
Çанталăка йăлт пăсать.

Мĕншĕн вăл хаярланать?
Ма çапла усалланать?
Мĕн турăм-ши эп ăна
Çав тери тарăхтарма?

Çумăрăм, çитет çуса.
Япăх ĕçшĕн каçарсам.
Тавăр пирĕн хĕвеле,
Ан çиллен эс ман çине.

Илтрĕ çумăр, чарăнчĕ.
Асамат кĕперĕ сарчĕ.
Хыççăнах хĕвел те тухрĕ,
Ман çине пăхса йăл кулчĕ.

*София НИКОЛАЕВА*.
Комсомольски районĕ,
Кĕçĕн Çĕрпўел шкулĕ.



Наташа ХРИСТОФОРОВА (Вăрмар районĕ, Шутнерпус) ўкерчĕкĕ.

## Пукане

Илсе пачĕç çуркунне
Мана пысăк пукане:
Хитре, сарă çÿçлине,
Çутă кăвак куçлине.

Патăм эп пуканене
Чăваш ячĕ – Селиме.
Юрататăп эп ăна,
Ак тухатпăр уçăлма.



Кристина ВАСИЛЬЕВА (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ўкерчĕкĕ.

## Çемье

Ытарми атте-анне,
Шăллăмпала тетесем...
Юрататăп вĕсене –
Пирĕн пысăк çемьене.

Яланах эпир пĕрле,
Пулăшатпăр пĕр-пĕрне.
Йывăрлăх сиксе тухсан
Пăрахмастпăр нихăçан.

## Шăллăмпа

Шăллăмпа эпир пĕрле,
Ав, вылятпăр теттепе.
Шăллăм тытрĕ машина,
Вăл хитре, пĕчĕк кăна.

Эпĕ вара упа илтĕм,
Упапа пĕрлех хам сикрĕм.
Лайăх-çке çав выляма,
Урамра чупкалама.

Шăллăмпа вылярăмăр,
Иксĕмĕр те ывăнтăмăр.
Теттесене пуçтарса
Кĕтĕмĕр киле канма!

## Халалласа

Шăллăма халалласа,
Ăна питĕ юратса
Çыртăм эпĕ тăрăшса
Сăвă пит хыпаланса.

Манăн чун епле юрларĕ –
Шăллăм сăввăма мухтарĕ,
Савăннипе вăл мана
Чуптурĕ ыталаса!!!



Кристина ВАСИЛЬЕВА (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ўкерчĕкĕ.

## Палан кукли

Илсе килчĕç ман валли
Хăнаран парне кукли.
Тунă ăна чустаран,
Ăшĕнче вара – палан.
Çисе пăхрăм кукăльне,
Туйрăм эпĕ йÿççине.
Юлтăр шăллăма валли.
Атте-анне çиччĕр-и?

## Шур кăмпа

Пĕррехинче вăрманта
Куртăм эпĕ шур кăмпа.
Ун çинче пур пĕчĕк çулçă,
Çавăнтах ак пĕчĕк пăнчă.

Татрăм эпĕ кăмпине,
Çывăх пăхрăм ун çине.
Пăнчă мар-çке, тупата –
Кăткă пулнă вĕт унта!

Илтĕм эпĕ кăткине,
Ятăм ăна çĕр çине.
Хитре, шурă кăмпана
Хутăм эп карçинккана.

*Оля АБРОСИМОВА*.
Тутарстан,
Аксу районĕ,
Кивĕ Саврăш шкулĕ.

## Савăнăçлă çуркунне

Килсе çитрĕ çуркунне,
Савăнтарчĕ çынсене.
Шăнкăртатрĕç шыв-шурсем,
Симĕсленчĕç улăхсем.
Ял хĕрринчи улăхра
Кĕтÿ тухрĕ пухăнса.
Кайăк сасси таврара
Халь тăрать янăраса.



Милена СМИРНОВА (Çĕрпÿ районĕ, Чурачăкри ача сачĕ) ўкерчĕкĕ.

## Атте ăшшисĕр

Кун хыççăн кун иртет умра,
Çапла шума йĕрки ун пур.
Пулсан та çамрăк, пурнăçра
Чылай эп куртăм хура-шур.

Атте килте çукки пăсать,
Анне пĕччен пире туртать.
Вăл пиршĕн ним те хĕрхенмест,
Анчах пире нихçан çитмест.

Пурнатпăр, чăн та, çăмăл мар,
Анчах ют çын ăна туймасть.
Нуши нумай, ăçта хурар,
Пире никам пулăшаймасть.

Пулăшкалатчĕ асатте,
Укçа парса, алĕçĕпе,
Анчах халь вăл леш тĕнчере,
Пурнас кун сÿнчĕ хуйхипе.

Куççуль юхни пулăшаймасть,
Ыр вăхăт пурпĕр çывхармасть.
Атте ăшшисĕр пурнăç – терт,
Малашлăх пурпĕр илĕртет.

Шкулти ĕçсем те çăмăл мар,
Кĕçех экзамен çывхарать.
Пĕрех пуçа усмалла мар,
Шанатăп: Турă пулăшать.



Максим ИВАНОВ (Вăрмар районĕ) ўкерчĕкĕ.

## Юнлă вăрçă кĕр-кĕрленĕ

Юнлă вăрçă кĕр-кĕрленĕ,
Мирлĕ пурнăçа пĕтернĕ,
Халăхăн чунне амантнă,
Туслăхран пурне те татнă.

Манăн халăх парăнмасăр,
Тăшмана пит кураймасăр,
Кар тăрса вăрçа васканă,
Чунĕпе татах вăйланнă.

Мăн кукаçисен кун-çулĕ
Мĕн чул çулăм витĕр тухнă.
Кайнă харсăррăн вăрçа,
Анчах лекнĕ тыткăна.

Тапаçланнă пит тухмашкăн,
Тăшмана йăлт аркатмашкăн.
Тыткăнра вăй-хал пĕтернĕ,
Вĕсене шыв çеç ĕçтернĕ.

Тăван кил те питĕ туртнă:
«Тар! Май туп!» – ялан васкатнă.
Çак ыр туйăм çулне уçнă,
Кукаçи тарма май тупнă.
Тарнă хыççăн кукаçийĕм
Шывсем урлă, кĕртсем çийĕн,
Тусĕсем патне васканă,
Тăшмана каллех çунтарнă.

Кукаçи пек вăйлă пулăп,
Ун ятне нихçан та манмăп:
Вăрçăран пире хăтарнă,
Çутă пурнăç халалланă.

Халь телейлĕ пурăнатпăр,
Çутă хĕвелпе тăратпăр,
Кунсерен шкула утатпăр,
Мирлĕ пурнăçа саватпăр.

## Халăх чысне çĕклекен

СССР космонавт-летчикне,
СССР икĕ хут Геройне,
Андриян Николаев ятне
Пирĕн халăх чысласть ĕмĕрне.

Вăл тĕнче уçлăхне вĕçнипе
Тĕлĕнтерчĕ кашни этеме,
Пит çĕклерĕ патвар пулнипе
Чăваш халăхĕн чаплă ятне.

Шуршăла халь такам та килет,
Пур тĕнче хисеплет çав яла,
Николаев музейĕпеле
Паллашать, пуç таять Шуршăла.

Летчик пулăп тесе пĕчĕкрен
Ÿсрĕ, ситрĕ ав çăлтăр патне.
Пĕр хутчен анчах мар, ик хутчен
Парăнтарчĕ тĕнче уçлăхне.

Николаев, эс Улăп пекех,
Наци паттăрĕ, чыс кÿрекен.
Эх, пуласчĕ-çке ман сан пекех
Тăрăшуллă, патвар çитĕнсен.

## Вилĕмсĕр ят

Ентеш, Энтепе каччи эсĕ,
Вунсакăр çулти маттур яш.
Хаяр тăшмана хĕрхенмесĕр
Çунтартăн, илейрĕн ыр ят.

Пит сĕмсĕр, хаяр çапăçаççĕ
Ав Гитлер захватчикĕсем.
Пĕрех салтаксем хăвалаççĕ
Атакăна çĕкленнĕçем.

Мĕн чул ырă тĕслĕх кăтартрĕ
Çемен çапăçу хирĕнче.
Фрицсен ретне вăйлă аркатрĕ
Çав кун уйрăмах ыттинчен.

Вут-хĕм пĕрĕхен тăшман дзочĕ
Çула пÿлнипе тарăхса
Мĕн чул вĕсене шăплантарчĕ
Ентеш паттăрла çапăçса.

Тискер нимĕçсем тапăнаççĕ,
Ав çулăм çăвать тÿперен.
Андреев Çемен, маттур каччă,
Хăюллă пулмашкăн чĕнет.

– Çĕршывшăн! – тесе кăшкăрать те –
Тăшман тимĕр учĕ çунать.
Татах ывăтать те граната
Тепри кисренсе чарăнать.

Анчах акă темшĕн шăпланчĕ
Чăваш ачин харсăр сасси.
Амантрĕ-çке нимĕç тăхланĕ,
Йăлт сÿнчĕ халь ун пуласси...

Нумай тăшмана пĕтермесĕр
Пĕр канăç тупман салтаксем.
Хăйсен пурнăçне шеллемесĕр
Çĕршывшăн кар тăнă вĕсем.

Пуçне хунă паттăр чăвашĕ,
Анчах унăн ячĕ пĕтмест.
Андреев Гварди сержанчĕ
Паттăр ятне тивĕçет.

*Евгения САРДАЕВА, 9-мĕш класс.*
Елчĕк районĕ,
Патреккел шкулĕ.

## Тăнăç пурнăçшăн – тав!

# Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи манăн çемье шăпинче

*Эпир историе каллех пăхатпăр,*
*Паянхине висетпĕр вăрçă кунĕпе.*
***М.Ножкин.***

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче ир-ирех фашистла Германи пирĕн çĕршыва хăрушла вăйпа тапăннă. Çĕршыв тÿссе ирттернĕ чи йывăр тĕрĕслевсенчен пĕри пулнă ку. Пирĕн патшалăхăн шăпи çеç мар, пĕтĕм тĕнче цивилизацийĕн пуласлăхĕ шухăшлаттарнă. Пин те тăватçĕр вунсакăр куна тăсăлнă вăрçă. Çав хăрушă вăрçă... Вăл кашни киле пырса шакканă, инкек илсе çитернĕ: амăшĕсем ывăлĕсене çухатнă, арăмĕсем упăшкисене кĕтсе илеймен, ачисем ашшĕсемсĕр юлнă. Арканнă ялсем, хуласем, пур çĕрте те выçлăх тата сивĕ, хурлăх тата куççуль...

Анчах нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр çынсем Тăван çĕршывшăн çапăçатчĕç. Пулас ăрушăн халăх вăйне шеллеместчĕ. Шутласан, мĕн чухлĕ çынна вăрçă телейсĕр тата савăнăçсăр хăварчĕ! Вăл тĕкĕнмен пĕр çемье те юлман пуль. Кашни килтенех кама та пулин вăрçа ăсатнă. Хĕрарăмсемпе ачасем тылра ĕçленĕ, салтаксене пулăшнă. Çавăнпа никам та, нимĕн те манăçман.

Манăн мăн асаттепе асанне тата мăн кукаçипе куками вăрçă çулĕсенче пурăннă. Çĕнтерÿшĕн вĕсем вăйхалне шеллемен. Пĕрисем хĕç-пăшал тытса фронтра çапăçнă, теприсем тылра ĕçленĕ.

Çак калава мăн асаттерен Васильрен пуçласан аванрах пуль. Фронта вăл питĕ çамрăкла, килте виçĕ пĕчĕк ачине хăварса тухса кайнă. Вăл пирĕн пуласлăхшăн, çĕршыва чечекленĕвĕшĕн çапăçнă. Мăн асатте киле таврăнайман, арăмĕпе ачисене тăлăха хăварнă. Çынсем выçлăхпа, сивĕпе нушаланса вилнĕ. Мăн асанне, Агафья, пепкисем выçса вилесрен вĕсене валли апат шыранă. Çимелли пулманпа пĕрех ун чухне. Хăй вара выçсах вилнĕ. Ачисем хăр тăлăха юлнă.

Манăн асаннен ашшĕ те, Филимон Федотович Егоров, вăрçа хутшăннă. Асанне вăл нумай-нумай суранпа тата куççăр таврăнни çинчен калаччĕ. Ку та унăн харсăрлăхне тата Тăван çĕршыва пулăшас туртăмне кăтартса парать пек. Анчах вăрçă хыççăн та вăл суранне пăхмасăрах тăван ялта ĕçленĕ.


Мăн асатте Филимон, тата мăн асанне, Анна.

Манăн иккĕмĕш мăн асатте – Алексей Васильевич Иванов. Вăл 1913-мĕш çулта çуралнă. 1940-мĕш çулта ăна Хĕрлĕ Çара чĕнсе илнĕ. Вĕсене Мурманск хулине янă. 104-мĕш полкра çыхăнуçă пулма вĕрентнĕ. Унтан ăна 1941 çулта фронта ăсатнă. Килте арăмĕ, манăн мăн асанне Анфиса, тата пĕчĕк хĕрĕ юлнă. Фронтра мăн асатте


Мăн асатте, Алексей.

çыхăнуçă пулнă. Взвод ăнăçăвĕсем те унран килнĕ теме юрать, мĕншĕн тесен информаци вăхăтра çитни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăрçăра каланă пек, çыхăнуçă чĕрĕ чухне взвод та чĕрĕ.

Пĕрремĕш кунхинех пирĕннисем фашист вăйне туйса илнĕ. Пирĕн çарсен каялла чакма тивнĕ. Тепĕр çулхине вĕсен чаçĕ тăшман ункинче юлнă. Виçĕ уйăх ытла вĕсем çав унка татма тăрăшнă, фашистăн техникине тата чĕрĕ вăйне шар кăтартма хăтланнă. 1942-мĕш çулхи декабрĕн вунпиллĕкмĕшĕнче совет çарĕ нимĕç ункине татса тухнă.

Мăн асатте, Алексей, ултă çул службăра тăнă, киле 1946-мĕш çулта чĕррĕн таврăннă. Вăл Чехословакие, Венгрие тата Румынине ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă. Мăн асаттене «1941-1945-мĕш çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн» медальпе чысланă.

Арăмĕ, Анфиса Федоровна Иванова, тылра тăрăшнă. Вăл 1916-мĕш çулта çуралнă. Ыттисемпе пĕрлех тырă тата тăвар миххисем çĕкленĕ. Хăш чухне унăн алă çухрăм ытла çуран утма та тивнĕ. Ытти колхозниксемпе пĕрле вăл Сыйрышбашево, Кушнаренково тата Буздяк ялĕсенчен пĕчĕк урапасемпе колхоз валли вăрлăх турттарнă. Мăн асанне 2005-мĕш çулччен пурăннă. Эпĕ ăна ăшă та ырă кăмăллă çын пек астăватăп, манпа калаçма е выляма яланах хавасчĕ. Вăл вăйлă çын пулни тÿрех паллă. Ăна вăрçă та, выçлăх та, шартлама сивĕ те хуçайман. Çак йывăрлăхсем витĕр вăл тивĕçлипех тухнă.


Мăн асанне, Анфиса.

Мăн кукаçи, Степан Ильич Тимофеев, 1914-мĕш çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнче Çĕнĕ Сименкке ялĕнче çуралнă. Мĕн ачаранах ашшĕ-амăшне хуçалăхра пулăшнă тата «Çăлтăр» колхозра ĕçленĕ. 1935 çулта Ленинград хулине ĕçлеме кайнă. 1937-мĕш çулта ăна çар тивĕçне пурнăçлама чĕнсе илнĕ. Кĕçĕн командирсен 14-мĕш стрелоксен полкĕнче вĕреннĕ, сержант званине илнĕ. Унтан ăна отделени командирĕ пулма суйланă. Финн вăрçинче мăн кукаçи çĕнтерÿчченех çапăçнă. Май уйăхĕн 14-мĕшĕнче ăна запаса кăларнă. Вара мăн кукаçи тăван яла таврăнса колхозра ĕçленĕ. Анчах тăнăç пурнăç нумая пыман, Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçи


Мăн кукаçи, Степан.

пуçланнă. 1941-мĕш çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче ăна каллех Хĕрлĕ Çар ретне чĕнсе илнĕ. 1942-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнче вĕсен полкĕ нимĕç фашисчĕсемпе çапăçăва кĕнĕ. Мăн кукаçи ертсе пыракан пулемет отделенийĕ харсăрлăхпа тата паттăрлăхпа палăрнă. Вĕсен хушшинче хăравçă чунлисем пулман. Çапла пĕр çапăçу вăхăтĕнче мăн кукаçине сулахай аллинчен амантнă. Вăл çар госпиталĕнче сипленнĕ. Сывалсах çитме ăна килне ăсатнă, анчах темиçе уйăхранах каялла чĕнсе илнĕ. Вăрçă вĕçленнĕ вăхăтра вăл Хĕвелтухăç Пруссире пулнă. Ун хыççăн ăна Инçет Хĕвелтухăçне куçарнă, японие самурайĕсене хирĕç çапăçмалла пулнă. Унăн çарти паттăрла ĕçĕсене пысăка хурса хакланă, «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» медальпе икĕ хутчен, «Японие çĕнтернĕшĕн», «Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи çĕнтерÿшĕн», «Кенигсберга илнишĕн» медальсемпе чысланă. Демобилизаци хыççăн мăн кукаçи тăван ялне таврăннă, колхозра малалла ĕçленĕ.

Мăн кукамая, Зинаида Сергеевнăна, вăрçăччен Ленинграда ĕçлеме янă. Ленинград блокади пуçлансанах вĕсене эвакуациленĕ. Чăваш Ене вăл


Мăн кукамай, Зинаида.

Атăл тăрăх пăрахутпа, ун хыççăн поездпа çитнĕ. Вăрçă вăхăтĕнче вăл ветеринар пулса ĕçленĕ. Çавăн пекех вăл колхозра çĕр сухалама, тырă акма, тыр-пул пуçтарса лаша çинче Буздяк элеваторне илсе çитерме пулăшнă. Ялта арçынсем юлман вĕт, пĕтĕмпех хĕрарăм хулпуççийĕ çине тиеннĕ. Мăн кукаçипе пĕрле вĕсем çичĕ ача пăхса ÿстернĕ, пĕлÿ панă.

Вăрçă çулĕсенче манăн асатте те, Алексей, сахал мар шар курнă. Çичĕ çултах тăлăха юлнă вăл. Шăллĕсене тăрантарас тесе вунпĕр çултах хирте ĕçлеме тытăннă. Анчах тÿссе ирттерни мĕн пур йывăрлăха пăхмасăрах пирĕн асаттесемпе асаннесем телейлĕ пуласлăха шанма пăрахман. Вĕсем пирĕншĕн усăллă пулма ăнтăлнă.

Мăн асаттесемпе мăн асаннесем тăхăмĕсен телейлĕ пурнăçĕ çинчен ĕмĕтленнĕ. Паянхи тăнăç пурнăçшăн эпĕ вĕсене тав тăватăп.

Çиреммĕш ĕмĕр чуми – фашизм – умне истори хаяр приговор тăратнă. Паянхи неофашистсемшĕн, нацистсемшĕн, пĕтĕм тĕнчери террористсемшĕн вăл асăрхаттару евĕр пултăр. Манăн шухăшпа, вăрçă вăл – пĕтĕмĕшле ăссăрлăх, çынсем йышлăн вилни. Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте кирек хăш ыйтăва та вăй тата чышкă пулăшăвĕпе татса пама юрамасть. Паянхи тĕп ыйту – çĕр çинче вăрçă тухасран сыхланасси.

Чунтанах ĕненетĕп, çынсем халăх паттăрлăхне нихăçан та манмĕç.

Эпир вара суймастпăр, хăрамастпăр, тăван çĕр-аннене яланах юратăпăр, уншăн вута та, шыва та кĕме, кирлех пулсан пурнăçа пама та хатĕр тесе сăмах паратпăр.

***Юлия ПОТАПОВА,***
***10 класс.***

Пушкăртстан,
Чекмагуш районĕ,
Юмаш шкулĕ.

***Ертÿçи:***
***В.А.ВАСИЛЬЕВ***
***вĕрентекен.***

Антип НИКОЛАЕВ

# ПАТТĂРСЕН ÇЕМЙИ

*(Малалли.*
*Пуçламăшĕ 13-15-мĕш номерсенче.)*

## Егор АЛЕКСЕЕВ



*Çара кайиччен вăл «Ядро» колхозри комсомол организацийĕн секретарĕ пулнă, 1938 çултанпа – Совет Çарĕнче. Шурă финсене хирĕç çапăçнă. Унтан Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче нимĕç фашисчĕсемпе кĕрешнĕ. 1943 çулхи декабрьте Житомир çывăхĕнчи çапăçура тăшман дзотне хăйĕн ӳчĕпе хупласа паттăрла вилнĕ.*

### «Егорпа пĕрле çапăçрăмăр...»

Çапла пуçларĕ хăйĕн калаçăвне Анатолий Шарыпов, 96-мĕш полкри виççĕмĕш батальон салтакĕ. Егор Алексеевпа яланах пĕрле пулнă вăл.

– Малтанхи çапăçăва салтак манма пултараймасть, – терĕ вăл. – Халĕ те çав кун куç умĕнчех. Пĕр пĕчĕк ял вĕçĕнчен пулеметсем татти-сыпписĕр шатăртаттарaççĕ. Ракетăсем çутăлаççĕ те – чупа-чупа куçакан салтаксем курăнса каяççĕ.

Пирĕн батальонăн атакăна каймалла. Пĕрремĕш çапăçу, пĕрремĕш атака.

...Эпир, темиçе кун хушши аллăшар çухрăм утса, çапăçу вырăнне килсе çитрĕмĕр. Çул çинче – нимĕçсен каялла чакнă чухне пăрахса хăварнă машинисем, хĕçпăшал, çунса кайнă танксем.

Çур çĕр тĕлне Пушкин ялĕ патĕнчи /Смоленск облаçĕ/ вăрмана çитсе чарăнтăмăр. Кунта полк штабĕ вырнаçнă. Чăтма çук сывăрас килет. Анчах çывăрма май килмерĕ. Пирĕн ума полк командирĕ тухрĕ. «Полк пысăк çухату тӳсрĕ, нимĕçсене Верхне-Ольгово ялĕнчен кăларса ывăтаймарĕ. Командовани эсир, тылра хатĕрленнĕ воинсем, пулăшасса шанса тăрать», – терĕ вăл.

Акă эпир ял хĕрринче. Гитлеровецсем урса кайсах пулеметсемпе переççĕ.

Часах атака, анчах фашистсен пулемечĕсене пĕтерсе хума май килмерĕ. Пирĕн çухатусем те пур ĕнтĕ. Семен Петров мина катăкĕ хулпуççиреn пырса тивнипе аманчĕ. Эпир, Егор Алексеевпа, Семенран инçех мар выртаттăмăр, çавăнпа лайăхах куртăмăр: Семен алли ластăрах усăнчĕ, ӳчĕ çинче çеç тытăнса тăрать иккен. Çийĕнчех Вера, медсестра, килсе çитрĕ. Семен ун патне çывăхрах пычĕ те, шăлне çыртса, çапла çеç каларĕ:

– Çых хытăрах!..

Çавăнтах: «Малалла!» – команда илтĕнсе кайрĕ. Эпир, Егорпа иксĕмĕр, ял еннелле чупса кайрăмăр.

Тăхлан сапакан сарайсем патне çитме пĕр çĕр метр çеç юлчĕ. Пирĕн минометсем те переççĕ. Шел, минăсем дзотри фашистсене лекеймеççĕ. Эх, тупăсемчĕ кунта! Пур вĕсем пирĕн, пур. Анчах тасться – кайра. Салтаксем вĕсене, тарăн юра ашса, алă вĕççĕн йăтса килеççĕ.

Шурăмпуç çуталса килет. Атакăна кĕме палăртнă вăхăт çитрĕ ĕнтĕ. Халĕ, ракетăпа сигнал парсанах, юлашки хут тапăнса пăхмалла.

...Каллех юр ăшĕнче выртатпăр. «Пĕр вырăнта выртма юрамасть, – шутлатăп эпĕ. – Фашистсем пурне те шăлса тăкма пултараççĕ. Хамăн отделение умри юра чавса малалла шума хушатăп. Пире курса, автоматчиксем те çапла тăваççĕ».

Тул çутăлнăçемĕн çутăлать. Дзот амбразури те палăракан пулчĕ – шăпах пирĕн умри сарайра. Халĕ вăл шăпланчĕ-ха. Анчах кăшт пуçа çĕклен çеç – çавăнтах пульăсем шăхăрма пуçлаççĕ.

Çапла пĕр çур сехете яхăн малалла шунă хыççăн тăшман дзочĕ патне çитме инçех юлмарĕ. Халĕ ĕнтĕ амбразурăна автоматпа пеме те юрать. Пирĕн отделени пеме тытăнчĕ.

Сылтăм енчи сăрт хыçĕнчен вăрăммăн «урра» кăшкăрни, гранатăсем çурăлни илтĕнсе кайрĕ. Апла пулсан, унта пирĕннисем яла пырса кĕчĕç.

Пеме чарăнмасăрах тăратпăр та дзот патнелле, ялалла, ыткăнатпăр. Амбразура шăпах. Çуртсем хушшипе фрицсем чупкалаççĕ.

– Тараççĕ, çăхансем! – кăшкăрать Егор Алексеев.

Ялĕ пысăк мар – пĕр урам çеç. Фашистсем вăрманалла тараççĕ.

– Сержант, – чĕнсе илчĕ мана рота командирĕ, – мĕнпур дзотсене, сарайсене тĕрĕслĕр, фрицсем лексен, ав, çав çурт патне илсе пырăр.

– Юрать, лейтенант юлташ! – тетĕп те отделение хам пата пухăнма сигнал паратăп.

Ирхи усă сывлăшра перкеленĕ сасăсем лăппансах пычĕç. Часах тытăçу вĕçленчĕ. Пирĕншĕн вăл пĕрремĕш çапăçу пулчĕ.

Тепĕр темиçе кунран мана амантрĕç. Çавăн хыççăн эпир Егорпа уйрăлтăмăр. Пирĕн полка вара урăх çĕре илсе кайнă.

Çапла вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне полк ветеранĕ Анатолий Шарыпов.

### Житомир патĕнче

Фронтăн ку енĕнче Егор Алексеев мĕнле çапăçни çинчен СССР Оборона министерствин Архивĕнчен ярса панă документсенчен пĕлтĕмĕр. Боевой донесенисем, дивизи хаçачĕн материалĕсем, полкри аслă командирсем пĕлтернисем татта паянхи кунччен сыхланса юлнă ытти хутсем герой биографине çĕнĕ страницăсем хушма май пачĕç.

...1943 çул вĕçĕнче – 1944 çул пуçламăшĕнче 1-мĕш Украина фрончĕн çарĕсем, ытти фронтсемпе тачă çыхăну тытса, малалла кусса пынă. 1943 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче Совинформбюро çапла пĕлтернĕ: «Пĕрремĕш Украина фрончĕн çарĕсем, пехота хăвăрт пырса çапнипе, танк соединенийĕсем ăнăçлă маневрсем тунипе, Украинăри область центрне, Житомир хулине, илнĕ».

Тăшман каялла чакнă пулин те Житомир таврашĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Фашистсем ниепле те хăйсен позицийĕсене парасшăн пулман. Тепĕр чухне вара пирĕн салтаксем талăкра та çĕр метр çеç малалла кайнă.

Егор Алексеев шăпах çавнашкал йывăр çĕрте çапăçнă. Тăшман хытă персе тăнине пула пирĕн пехотинецсен ирĕксĕрех юр çине выртма тивнĕ.

Батальон командирĕ аслă лейтенант Гордиенко, лутра та сарлака кĕлеткеллĕ çын, нимĕçсенчен тин кăна тытса илнĕ траншейăран малалла тинкерсе пăхнă. Халĕ ăна хăй умĕнчи юрпа витĕннĕ айлăм кăна интереслентернĕ. Чи ансăр вырăнта, нимĕçсен çунтарса янă çуртсем хушшинче, кирпĕчрен купаланă кивĕ мунча курăнса ларнă.

– Çĕр çăттăр çав мунчана. Гитлеровецсем унта икĕ амбразурăллă дзот туса хунă. Çук, çав «шĕпĕне» тăпăлтарса пăрахмасан, батальон малалла каяймĕ, – хăй тĕллĕнех калаçнă комбат.

Тĕттĕмленсе пынă. Кунĕпех йĕпе юр çунă пулнă, халĕ вăл лăпах чарăннă. Сивĕ çил çĕкленнĕ. Салтаксен тумтирĕ те пăрланса хытма тытăннă.

Батальонăн сăнав пункчĕ вырнаçнă блиндажа кĕнĕкĕменех аслă лейтенант телефониста çапла хушрĕ:

– «Хурăнпа» çыхăнтарăр мана!

Телефонист аппарат аврине çавăркаларĕ, трубкине вĕркелерĕ те офицера пачĕ.

– Итле-ха, Алексей, – васкаса калаçма пуçларĕ комбат артиллери дивизионĕн командирĕпе. – Айлăмри мунчана куратăн-и? Çапла çав – дзот! Тархасшăн, сирпĕнтер ăна. Пуса çĕклеме памасть вĕт, мур илесшĕ.

Часах батальон умĕнче тупăсем ухлатма та пуçларĕç. Артиллеристсем тăрăшса ĕçлерĕç. Темиçе минутранах мунчана салатса пăрахрĕç те вăрман уçланкине пеме тапратрĕç.

Гордиенко комбат приказĕ тăрăх пехотинецсем атакăна çĕкленнĕччĕ кăна – каллех выртма тиврĕ: дзот «чĕрĕлчĕ», икĕ пулеметпах şатăртаттарма пикенчĕ.

Артиллеристсем дзот çине тепĕр хут персе пăхрĕç. Пехотинецсем çĕнĕрен атакăна çĕкленчĕç – хальхинче те ăнăçсăр...

Каç та пулчĕ ĕнтĕ. Сивĕ. Çил кастарать. Боецсем юра чавса кĕрсе выртрĕç.

Юр айĕнче выртакан салтаксемшĕн вăхăт çав тери вăраххăн шурĕ, çапăçăва хатĕрлекен командирсемшĕн вара питĕ хăвăрт иртсе пычĕ. Хĕвелтухăç те хĕрелме пуçларĕ ĕнтĕ. Аслă лейтенант Гордиенко салтаксем патне таврăнчĕ. Вăл тăшман дзотне пĕтерсе тăкмалли ансат планпа паллаштарчĕ. Анчах ăна пурнăçлама питĕ йывăр: дзот патне вăрттăн шуса пымалла та ун ăшне гранатăсем вăркăнтармалла...

Вăрттăн çывхармалла... Калама кăна çăмăл. Анчах тăшман тăтăшах ракетăсемпе çутатнă чухне, персе тăнă вăхăтра ун патне пырса пăх-ха! Хăюллă та харсăр салтаксем кирлĕ кунта. Çавнашкаллисене суйласа илес тĕллевпе пычĕ те ĕнтĕ Гордиенко воинсем патне.

### Висĕ паттăр

Калаçу вăрăма пымарĕ. Мĕн тумаллине, мĕнле хăрушлăх кĕтнине пурте лайăх ăнланнă. Кам хатĕр тесе ыйтсан, салтаксем самантлăха шăпах пулчĕç. Унтан такам ури айĕнче юр чăкăртатса илчĕ, тахăшĕ шăппăн кăна сăмах хушрĕ:

– Эпĕ хатĕр!

Сасăранах палларĕ командир: ку – батальон ветеранĕ, çамрăк мар ĕнтĕ, наступлени умĕн çеç-ха Гордиенко ăна партие кĕме рекомандаци панăччĕ... Ун хыççăн стройран пĕрремĕш взвод командирĕн помощникĕ, сивĕч чĕлхеллĕ те хастар аслă сержант тухрĕ.

Кĕтмен çĕртен аслă лейтенанта хулпуççинчен такам майĕпен перĕнчĕ. Гордиенко çаврăнса пăхрĕ. Унпа юнашар иккĕмĕш взводри виççĕмĕш отделени командирĕ Егор Алексеев сержант тăрать. Ахаль чухне сăмах вакласах каймансккер, вăл та кĕскен кăна пĕлтерчĕ:

– Эпĕ те хатĕр.

Тĕрĕссипе каласан, батальон командирĕ çакна кĕтменччĕ. Егор çамрăк-ха. Унăн çичĕ пиччĕшĕпе шăллĕ фронтра çапăçни, вĕсенчен пĕри, Иван, вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех пуçне хуни çинчен те комбат лайăх пĕлнĕ. Пиччĕшĕ вилнĕ хыççăн Егор пичĕ çинче ăшă кулă пулнине Гордиенко пĕрре те курман. Пысăк хуйха çавнашкал чăтса ирттерме пĕлнĕшĕн комбат хисеплетчĕ, юрататчĕ Егора. Халĕ, акă, ăна та вилĕм вутне ăсатмалла. Хĕрхенет комбат Егора, анчах вăрçă – нимĕн тума та çук.

– Юрать, – терĕ аслă лейтенант. – Виççĕн çитет. Хатĕрленĕр!

Салтаксем юлташĕсене хăрушă çула хатĕрлеме пуçларĕç. Лешсем гранатăсем илчĕç, автомачĕсене авăрларĕç.

...Шурă маскхалат тăхăннă висĕ салтак чăнкă çыран тăрăх шăппăн хăпарчĕ те тĕттĕмре çухалчĕ.

Дзот патне çитме инçе те мар ĕнтĕ. Анчах та мĕнле йывăр çав пĕр икçĕр-виççĕр метра шуса тухма! Гитлеровецсем тăтăшах ракетăсемпе çутатаççĕ, пулеметсемпе персе тăраççĕ. Хушăран минăсем шартлатса çурăлаççĕ.

Тĕмеске патĕнчен тĕмеске патне майĕпен, асăрханса шурĕç вĕсем. Варринче – аслă сержант: вăл – ертсе пыраканни. Сулахайра леш ватă салтак, задание кайма пуринчен малтан килĕшнĕскер, сылтăмра – Егор Алексеев.

Тул çутăлса килет. Васкамалла. Тăшман вара çаплах перет-ха. Дзот патне çитме пĕр аллă метртан ытла та мар. Висĕ салтак пĕлтĕрхи хăмăш хушшине кĕрсе вырнаçрĕ. Сывлăш çавăрса ячĕç те каллех малалла шурĕç. Хăвăртрах, хăвăртрах! Çутăличчен ĕлкĕресчĕ!

Гитлеровецсем кăштах лăпланчĕç. Дзот шăпăртах. Кивĕ мунча пĕренисем хушшинчен рельс вĕçĕсем курăнаççĕ. Авă мĕншĕн сирпĕтме май килмерĕ иккен ăна. Дзот мар, чăн-чăн дот!

Виççĕшĕнчен тахăшĕ асăрханмасăр хускалкаласа илчĕ пулмалла та – гитлеровецсем сисрĕç – дзотăн икĕ амбразуринчен те вут-хĕм сирпĕнчĕ.

Пĕр вунпилĕк минут хушши тăшман пулеметчикĕсем урса кайсах печĕç. Унтан каллех лăпланчĕç.

Çутăлса та çитрĕ. Халĕ ĕнтĕ дзот патне вăрттăн пырасси çинчен ан та шутла. Мĕн тумалла? Каялла çул çук. Кирек мĕнле пулсан та приказа пурнăçламаллах. Унсăрăн батальона кăна мар, пĕтĕм полка йывăр килет. Мĕнех вара! Юлашки хут тытăнса пăхас пулать!

Аслă сержант юлташĕсене куçран пăхрĕ те тӳрех ăнланчĕ: вĕсем тем тума та хатĕр. Кăкăр тулли сывласа илчĕ те хăвăрт ура çине çĕкленчĕ: граната йăтса, дзот еннелле ыткăнчĕ. Ун хыççăн ыттисем те чупрĕç.

Дзот патне çитме çирĕм-çирĕм пилĕк метр кăна юлнăччĕ. Сулахайри салтак граната ывăтма аллине çĕкленĕччĕ – ывăтса ĕлкĕреймерĕ, пулемет черечĕ ăна ураран ӳкерчĕ. Аслă сержант та хаяррăн кăшкăрса ячĕ, анчах хăяккăн тăрса тата темиçе утăм турĕ, гранатине ывăтрĕ те тĕшĕрĕлсе анчĕ.

Граната амбразура умне ӳксе çурăлчĕ. Гитлеровецсене вăл самантлăха хупласа лартрĕ. Шăп çав самантра усă курса, Егор Алексеев дзот умне чупса çитрĕ. Унтан вăл сылтăмри амбразурăна осколкăллă граната вирхĕнтерчĕ.

Взрыв кĕрĕслетсе илчĕ. Дзотра шăп. Икĕ амбразуринчен те хура тĕтĕм йăсăрланса тухрĕ.

«Дзот путланчĕ», – шутларĕ Егор Алексеев. Унтан тин вăл хысалалла, хамăрăннисем еннелле, çаврăнса пăхрĕ.

Хĕвелтухăçĕнче, вăрман хыçĕнчен, хĕвел çĕкленет. Егор сигнал панă пекех, пирĕн тупăсем кĕрĕслеттерме тытăнчĕç. Юрлă уй тăрăх ротăсем хĕвеланăçнелле талпăнаççĕ.

Шăпах çак самантра чи хăрушă инкек сиксе тухрĕ. Атакăна çĕкленнĕ салтаксем çине каллех тăшман пулемечĕ пеме тапратрĕ.

«Дзот чĕрĕлчĕ!» – тĕлĕнчĕ Егор. Тарăхса кайнăскер, амбразурăна хăйĕн юлашки гранатине вирхĕнтерчĕ. Сасартăк хăй те аманчĕ. Майĕпен ӳкрĕ... Тăшман пулемечĕ те шăпланчĕ.

Тепĕр темиçе кунран батальон командирĕ Гордиенко Чăваш республикине, Егор тăванĕсем патне, çыру ăсатрĕ.

...Çак çырăва кăтартрĕ те ĕнтĕ Татьяна Николаевна çĕр касма кĕнĕ фронтовиксене. Ывăлĕпе пĕр полкра пулнă салтаксем хăйсен юлташĕ Егор Алексеев, Совет Союзĕн Геройĕ Александр Матросов пек, паттăрлăх кăтартни çинчен тĕплĕн каласа пачĕç.

**(Малалли пулать).**

# Хавасла 2015 самант

## Ребус



***Авалхи грексен паллă философĕ тата ăсчахĕ Аристотель каланă çунатлă сăмахсем вуланĕç.***

## Сăмах вăчăри-криптограмма



1. Сунарçăсем тата пулă тытас ăсталăх çинчен кĕнеке хайланă вырăссен паллă писателĕ. 2. Вырăссен писателĕ, врач. 3. А.Пушкинăн старикпе ылтăн пулă çинчен калакан юмахри чĕрĕ мар сăнар. 4. Çурçĕр Кавказри халăхсен пĕр-пĕр киревсĕр ĕç тунăшăн йăхран хăваласа янă çын. 5. Камчаткăри ăтăр. 6. Чăваш писательници. 7. Сиплев учрежденийĕ. 8. Ӳнерçĕ хăйĕн сăнне ӳкернĕ ĕç. 9. Ырă ĕçшĕн каланă сăмах.

***Сăмах вăчăринчи саспаллисемпе усă курса (числительте – сăмах номерĕ, знаменательте – саспалли вырăнĕ) криптограммăна шутлăр. Сăмахсен тупсăмне тĕрĕс çырсан, аялти паллă тунă йĕркесене вĕсенчи саспаллисене вырнаçтарсан, вырăссен паллă зоологĕ, натуралисчĕ, Раççейри пулăсене тĕпчесе кĕнекесем çырнă ăсчах хушамачĕ вуланĕ.***

## «Паллă вăрман» анаворд



***Пушă тăваткалсене йывăç ячĕсене çырăр. Чăвашри паллă вăрмана халалласа А.Галкин сăввипе О.Агакова юрă та çырнă. Паллă тунă юпара çак юррăн ячĕ вуланĕ.***

1. Пирĕн тăрăхри йывăç, ун хуппипе, çулçипе, кăчкипе халăх медицининче анлă усă кураççĕ. 2. Йĕлме йышне кĕрекен йывăç. 3. Çулла хăйĕн мамăкне вĕçтерекен йывăç. 4. Лăсăллă йывăç, Çĕнĕ çул илемĕ. 5. Чăвашсем кăмăллакан йывăç. 6. Пуртă аври тума селĕм йывăç. 7. Укăлча умĕнче – шурă .../ Укăлча умĕнче – сирĕн кил (юрăран). 8. Строительствăра анлă усă куракан йывăç. 9. Çырла паракан тĕм, йывăç. 10. Кăнтăрти хурăн йăхне кĕрекен йывăç. Унран пир станĕн ăсине, музыка сăпрайĕсене ăсталаççĕ. 11. Уй варринче лаштра ...,/ Атте тесе, ай, кайрăм та ... (юрăран). 12. Мăйăр паракан йывăç е лиана.

## «Пĕр сăмах урлă» пуçватмăш




***Çак планетăн ячĕ çумне ытти сăмахсене çыпăçтарса пушă тăваткалсене çырса тултарăр.***

Асс–Елец–Марс–Ырçа–Алапа–Арсен–Артек–Ермак–Катер–Кăмпа–Кăткă–Латук–Львов–Нерет–Рулет–Серте–Сехре–Çулçă–Çырма–Цанга–Ырзем–Вĕрене–Соната–Улатăр–Хирург–Баккара–Вольтер–Лăрккаç–Тасмани–Улатăпа–Уçланкă–Ватерпас–Хĕрлĕ çыр.

*Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.*